Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 ОКТЯБРЬ 24 ТУНТИКУН 246 (5059) №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

21-мĕш çул тухать ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн хаçачĕ Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом Печати.

ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, ред. заместителĕн—3—97, редакци секретарĕн—4—40, парти пурнăç пайĕн—0—85, ял хуçалăх пайĕн — 4—97, советсен пайĕн—0—88, промышленнăç пайĕн—7—97, ялкорсен пайĕн—2—30, дежурнăйĕн — 6—23.

Йалти суту-илӳ ĕçне вăйлатассишĕн

Совет суту-илӳ çиçтеминче потребкоопераци пит те пысăк вырăн йышăнса тăрать. Вăл йалта суту-илӳ тăвать. Совет гражданĕсем—колхозниксем, ĕçхресченсем, йалти интеллигенци ыйтакан таварсене кӳрсе тăрса, потребкоопераци вĕсен пурнăçпа йăла условийĕсене лайăхлатма, колхоз стройне çирĕплетме пулăшать.

Совет суту-илӳ работникĕсем вуншар мĕлйун çынсем хушшинче ĕçлеççĕ. Вĕсем тавар илекенсене тавар туса кăларакансемпе çыхăнтараççĕ, потребителĕ мĕн ыйтнине промышленнăç умне лартаççĕ. Çавăн пек ĕнтĕ ответлă та хисеплĕ совет суту-илӳ работникĕсен ĕçĕ.

Партипе правительства потребкооперацине, суту-илӳ работникĕсене тăтăшах пулăшса пыраççĕ. Потребкоопераци çиçтеминче „ĕçленĕ" халăх тăшманĕсен йăвисене çĕмĕрсе тăкнă. Троцкисла-бухаринла бандитсем, буржуалă-националиссем халăха курайман, çавăнпа та вĕсем халăха таварсăр тăратса хăварасшăн, йалти совет суту-илӳне пĕтерсе лартасшăн пулнă. Анчах вĕсен ĕмĕчĕ ĕçе кĕреймерĕ,—вĕсене пирĕн йуратнă наркомвнуделĕцсем çапса аркатрĕç. Кооперацинчи йертсе пырас ĕçсене çĕнĕ çынсем килчĕç. Суту-илӳ ĕçĕнче ĕçлеме халĕ тивĕçлĕ условисем туса панă.

Чăваш республикĕнче потребкооперации таварçавăрнăш планĕсене йăнăçлăн тултарса пырас тĕлĕшпе малтанхи утăмсем туни палăрать. 1938 çулти таварçавăрнăш планне Чăвашсойуз иккĕмĕш кварталта 100 проц., виççĕмĕш кварталта 103 процент ытла тултарчĕ. Таварçавăрнăш планĕсене тултарас ĕçре Çĕмĕрле, Шăмăршă, Сĕнтĕрвăрри, Йĕпреç тата Тăвай районĕсем малта пыраççĕ.

Йалти суту-илӳ ĕçĕнче советлă кулътурăлă суту-илӳве вăйлăн аталантарса пырассишĕн тăрăшса ĕçлекен лайăх çынсем сахал мар. Акă илер, Шуршăл (Сĕнтĕрвăрри р.) йалпо председателне Константин Белова. Унăн йалповĕ республикăра пăллă хисепре.

Лайăх ĕçлекен йалпо вăл çакăн пек пулмала. Унта растрата çук. Таварсене çаратмаççĕ. Продавецсем потребителсене кăмăллăн йышăнаççĕ. Куллен кирлĕ таварсене татти-сыпписсĕр кӳрсе тăраççĕ. Йалпо урлă пыракан пур хатĕрлевсене те ытлашшипех тултараççĕ. Таварçавăрнăш планĕсене те йăнăçлăн пурнăçа кĕртеççĕ. Суту-илӳ ĕçĕ тупăшлă пырать. Çакăн пек ĕçлет те ĕнтĕ Шуршăл йалповĕ.

Мăн Йамаш (Хĕрлĕ Чутай р.) йалпо председателĕ Михайлăв та йалпо ĕçне лайăх йĕркеленĕ. Вăл йалпо председателĕнче 8 çул ĕçлет. Йалпо работникĕсем пĕр-пĕринпе ăмăртаççĕ. Плана ытлашшипех тултарса пыраççĕ. Суту-илӳ отличникĕ Игнатйĕв лавкана кулътурлă тытать, йалсоветри суту-илӳ çекцинче активлăн ĕçлесе пырать.

Лайăх ĕçлекен йалпосем татах та пур. Çапах та, Чăвашсойуз тата унăн вырăнсенчи чылай организацийĕсем çакăн пек паха опытсемпе усă курмаççĕ. Вăл опытсене ытти çĕре сарас тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлени çук.

Суту-илӳ ĕçĕ халăх хуçалăхĕнче халĕ те кайа йулса пыракан участкă пулса тăрать. Чылай райсойузсем таварçавăрнăш планĕсене тултараймаççĕ. Виççĕмĕш квартал таварçавăрнăш планне Ишлей райсойузĕ 87,3 процент кăна, Шăхасан—92 проц., Вăрмар—98 процент тултарнă.

Иртнĕ çул пирĕн республикăра 135 йалпоран 55 йалпо убыткăлă ĕçленĕ. Убыткăлă ĕçлекен йалпосем кăçал та пур. Вĕсен хисепĕ 18 процента çывхарать. Пĕрремĕш çурçуллăхра уйрăмăнах Вăрнар, Патăрйел, Вырăс Сурăм (Елĕк р.), Турхан (Сĕнтĕрвăрри р.) йалповĕсем убыткăлă ĕçлерĕç.

Убыткăлă ĕçлени, таварçавăрнăш планĕсене йăпах тултарни—чи малтан суту-илӳ работникĕсенчен килет. Потребкооперации работникĕсем суту-илӳ ĕçĕнче пулнă сăтăрла ĕçсен йулашкийĕсене пĕтерессине вăрахăн туса пыраççĕ. Потребкооперации ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем пур. Нумай йалпосенче куллен кирлĕ таварсем час-часах пулмаççĕ. Таварсене кӳрсе килессине тĕрĕс планламаççĕ. Тăвар, сахăр, краççин, махорка, спичка тата ытти куллен кирлĕ таварсене хăшпĕр çĕре нумай, хăшпĕр çĕре сахал кӳрсе килеççĕ. Потребителсем мĕнле тавара мĕн чухлĕ ыйтнине пĕлмеççĕ, вĕсене шута илмеççĕ.

Чăвашсойуз, райсойуз аппарачĕсенче халĕ те бӳрократла меслетсемпе ĕçлес йăла пĕтмен-ха. Кунта йертсе пыракан работниксем кооперации членĕсем хушшинче ĕçлемеççĕ, ытларах кабинетсенче ларма йуратаççĕ. Йалпосем нумайĕшĕ йалпо членĕсем умĕнче отчотсем сайра-хутра кăна тăваççĕ, вĕсен наказĕсене, сĕнĕвĕсене пурнăçа кĕртмеççĕ.

Чылай йалпо работникĕсен пуçарулăх çитмест. Вĕсем тавар кӳрсе парасса çеç кĕтсе лараççĕ, вырăнсенчех, аласти ертелĕсенче кăларакан таварсене тупма тăрăшмаççĕ.

Потребкооперацин ĕçĕнчи пысăк сийенлĕх—вăл растрата. Чылай райсойузсем тăрăх растрата пĕтес вырăнне ӳссе пырать. Елĕк районĕнче кăçал пĕрремĕш кварталта 40.197 тенкĕлĕх растрата тунă. Иккĕмĕш кварталта вăл хисеп 58.635 тенке, виççĕмĕш кварталта 61.142 тенке çитнĕ. Райсойузсем, йалпосем растратчиксемпе тивĕçлĕн кĕрешмеççĕ, час-часах вĕсене, пĕр ĕçрен тепĕр ĕçе куçарса, хӳтĕлеме тăрăшаççĕ. Çак сийенлĕхе йалалăхах пĕтерсе хума вăхăт ĕнтĕ! Потребкооперации çиçтемин хăйĕн ĕçне татăклăнах çĕнетес пулать.

Тăваттăмĕш квартăла кĕни уйăх çитет ĕнтĕ. Ку квартал таварçавăрнăш планне тултарас ĕçе татса парать. Тăваттăмĕш кварталти таварçавăрнăш планĕ виççĕмĕш кварталтинчен чылайах пысăк. Потребкооперации работникĕсен хуçалăхлă-политикăлă пысăк задачи вăл—çак çирĕплетнĕ плана ытлашшипех тултарассишĕн кĕрешесси пулать.

Кăçал потребкооперации аллине торгсен йалти магазинĕсем куçрĕç. Ку ĕнтĕ колхозниксем валъли тавар кӳрсе тăрас ĕçре потребкооперацин ответлăхне татах та нумай ӳстерет. Тавар кӳрсе килессине тĕрĕс мар планлани, таварçавăрнăш планĕсене тултарманни, совет суту-илӳ йĕркисене пăсни, потребителсене хакламанни, расратăсем туни малашне ан пулччăр. Çакна тума ыйтать кооперации членĕсен масси. Потребкооперацин тăваттăмĕш кварталти таварçавăрнăш планне тултарасси çак çитменлĕхсемпе çине тăрса кĕрешнинчен, суту-илӳ работникĕсем хушшинче социалисăмлă ăмăртăва анлăн сарнинчен, суту-илӳ ĕçĕнче çĕнĕ формăсемпе сарлакан усă курнинчен килет.

Уйрăмăнах суту-илӳ работникĕсемпе ĕçлессине тивĕçлĕн йĕркелени кирлĕ. Совет суту-илӳ работникĕсене политика тĕлĕшĕнчен воспитани парасси—парторганизацин ответлă ĕçĕ. Потребкооперации работникĕсене теори тĕлĕшĕнчен ӳстерсе пыни, болъшевикла воспитани пани суту-илӳ аппарачĕсен ĕçри пахалăхне çӳле çĕклеме пулăшĕ.

Чаплă уйав—Октябĕр уйавĕ çывхарать. Кооперацисенче ĕçлерен çĕршер, пиншер совет патриочĕсем уйава çĕнĕ парнесем хатĕрлеççĕ, хăйсен ĕçĕнче ăмăртса ĕçлеççĕ. Октябĕр уйавĕ умĕнхи ăмăрту кунран-кун анлăран та анлăрах сарăлса пырать. Çак политикăлă тата производствăлă çĕкленӳпе потребкооперацин ĕçне тĕпренех лайăхлатассинче анлăн усă курни кирлĕ. Йалти совет суту-илӳне сарасси, суту-илӳ ĕçне лайăхлатса пырасси—партипе совет организацийĕсен вирлĕ задачисенчен пĕри пулать.

Инçет-Хĕвелтухăç крайне икĕ крайа уйăрнă

ССР Сойуз Верховнăй Совет Президиумĕ Инçет-Хĕвелтухăç крайне уйăрса Приморск тата Хабаровск крайĕ тăвасси çинчен 1938 çулти октябĕрĕн 20-мĕшĕнче Указ кăларнă.

Хабаровск крайĕн центрĕ Хабаровскра. Приморск крайĕн центрĕ Владивостокра пулать.

Хабаровск крайне: Хабаровск облăçĕ (Калининск, Красноармейск тата Бакинск районĕн 26 йалсоветĕсемсĕр пуçне), Амурск, Нижне-Амурск, Камчатка, Сахалин облăçĕсем тата Иеврейсен Автономлă облăçĕ кĕреççĕ.

Приморск крайне: Приморск, Уссурийск облăçĕсем, Хабаровск облăçĕнчи Калининск тата Красноармейск районĕсем кĕреççĕ.

ССРС Халăх Комиссарĕсен Советĕнче

Колхозсенче йалхуçалăх производствипе çыхăнса тăман промышленнăçлă предприйатисем организацилени çинчен

Чылай районсенчи колхозсем çумĕнче йалхуçалăх производствипе çыхăнса тăман промышленнăçлă предприйатисем организациленĕ. Çапла, Ростов облăçĕнчи Бело-Калитвĕнск районĕнчи колхозсем („Новая жизнь", „Гремучий ключ", „Северный Кавказ" т. ыт. те) промышленнăçлă йĕркепех çĕркăмрăк кăларма пуçланă. Çак районри колхозсен шахтисенче тара тытнă рабочисем 273 çын ĕçлеççĕ. Мускав облăçĕнчи Подолъск районĕнчи хăшпĕр уйрăм колхозсенче („Ям", „Лукинский" т. ыт. колхозсем) тата Ленинград облăçĕнчи Парголовск районĕнчи колхозсенче („Вперед", „2-ое Парголово" колхозсем) йалхуçалăхпе çыхăнса тăман тĕрлĕрен предприйатисем организациленĕ, сăмахран: краскăсем тăвакан производствă, електромонтаж маçтерскойĕ т. ыт. те.

Колхозсем çумĕнче йалхуçалăхпе çыхăнса тăман промышленнăçлă предприйатисем организацилени çинчен калакан çавнашкал фактсем ытти облăçсенчи районсенче те пур.

Хăшпĕр тĕлсенче колхозсем хăйсем организациленĕ промышленнăçлă предприйатисенчен куракан убыткăсем, колхоз йалхуçалăхĕнчен çулталăк хушшинче илекен доходсенчен те пысăкрах пулаççĕ. Колхоз правленисем вара çав убыткăсене колхозниксене йалхуçалăх ĕçĕнче ĕçлесе тунă ĕçкунĕсемшĕн тивекен доходсен шучĕпе саплаççĕ.

ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çакна палăртнă: колхозсенче йалхуçалăхпе çыхăнса тăман промышленнăçлă предприйатисем организацилени вăл, йалхуçалăх ертелĕн уставне хирĕç пырать, колхозсенче çĕркăмрăкне промышленнăçлă йĕркепех кăларни, кунсăр пуçне тата, ССР Сойузĕн Конституцине (Тĕп Саккунне) тӳррĕмех пăсни пулать, мĕншĕн тесен Конституци тăрăх çĕр ăшĕнчи пуйанлăхсем государствă харпăрлăхĕ пулса тăраççĕ.

Вырăнсенчи совет организацисем чарманнипе тунă çак саккунсăр ĕçсем колхозниксене тӳррĕмех сийен кӳреççĕ, вĕсене ĕçкунĕсем тăрăх тивекен доходсене пĕчĕклетеççĕ.

Çак государствăна хирĕçле тата колхоза хирĕçле ĕçе пĕтерсе лартма кирлĕ тесе шутласа, ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çапла **йышăннă:**

1. Колхозсенчи йалхуçалăх производствипе çыхăнса тăман промышленнăçлă предприйатисене, вĕсене йалхуçалăх ертелĕн уставне пăсса организациленĕ тесе шутласа, пĕтерес.

2. Çакăн пек тумала тăвас: колхозсем çумĕнчи çак постановлени тăрăх пĕтермели промышленнăçлă предприйатисене районсенчи ĕçтăвакан комитетсем вырăнсенчи государствă организацийĕсемпе кооперативлă организацисене параççĕ.

3. Колхозсем çумĕнче йалхуçалăх производствипе çыхăнса тăман промышленнăçлă предприйатисем—саккунсăр йĕркепе организациленĕ предприйатисем тунине тĕрĕслесе тухма, уншăн ответлисене ответ тыттарма ССР Сойузĕн Прокурорне хушас.

(ТАСС).

Мотоциклсем, велосипедсем, патефонсем, пластинкăсем

Машиностройени Халăх Комиссариачĕн предприйатийĕсем мотоцикл, велосипед, çĕвĕ машинĕ, патефон тата куллен кирлĕ ытти тĕрлĕ таварсене чылай нумайрах туса кăларма тытăнаççĕ.

Мускаври „Велозавод" кунсеренех 1.000 велосипед ытла туса кăларать. Савăт пысăк пахалăхлă велосипедсем туса кăларма тытăннă. Октябĕр праçникĕ тĕлне вăл çавăн пек велосипедсене 2.500 туса кăларать.

Ижевскри мотоцикл савăчĕ программăна лайăх тултарса пырать. Октябĕрте вăл 500 мотоцикл туса кăларать.

Ленинградри, Коломнăри тата Владимирти патефон тăвакан савăтсем октябĕрте 68,6 пин патефон (çентябĕртинчен 15 пин ытларах) туса кăлараççĕ.

Ногински тата Апрелевски савăтсем октябĕрте патефон пластинкисем 6,7 мĕлйун туса кăлараççĕ. Вăл савăтсем çавăн чухлĕ нумай пластинкă халиччен нихăçан та туса кăларман-ха.

(ТАСС).

Ленинла-сталинла комсомол XX çул тултарнă тĕле

Шагай вперед, комсомольское племя,
Шути и пой, чтоб улыбки цвели!
Мы покорим пространство и время,
Мы—молодые хозяева земли.

Мы все добудем, поймем и откроем—
Холодный полюс и свод голубой.
Когда страна быть прикажет героем,—
У нас героем становится любой.

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Е. Мелъникăвă художник тунă плакат, ăна „Искусство" издательстви кăларнă (йурă текстне—поет-орденоносец В. Лебедĕв-Кумач çырнă).

Сойузфото репродукцийĕ.

„Родина" самолъотăн паттăр екипажĕ çул çинче

Чаплă лъотчицăсене—Гризодубăвă, Осипенко тата Раскова йулташсене Хабаровскран Мускава çитерме лартса тухнă експресс виççĕмĕш талăк ĕнтĕ çул çинче пырать. Пур станцăсенче те пуйăса ĕççыннисем кĕтсе илеççĕ, „Родина" самолъотăн геройла екипажне саламлаççĕ.

Лъотчицăсем ларса пыракан вакун кашни станцăрах трибунă пек туйăнса тăрать, вăл трибунă çинчен партине, правительствăна, Сталин йулташа чунтан, вĕçĕ-хĕррисĕр йуратни çинчен калакан хĕрӳлĕ сăмахсем вĕçеççĕ.

Машиниссем-кривоносовĕцсем, станцăсенче тăван çĕршывăн геройла хĕрĕсемпе ĕççыннисем тĕл пулакан хавасла минутсем вăрăмрах пулччăр тесе, пуйăса станцăсене графикра кăтартнинчен маларах илсе çитереççĕ.

Октябĕрĕн 22-мĕшĕнче тул çутăлса килнĕ чух пуйăс Читана пырса çитнĕ. Вăл вăхăтра пит ир пулнă пулсан та, станцăна чукун-çул работникĕсемпе красноармейĕцсем пухăннă. Перрона прожектăрсемпе çутатнă, хĕрлĕ йалавсемпе илемлетнĕ. Митингра Гризодубăвă йулташ тухса каланă. Митинга пухăннисем Сталин йулташ патне салам йама йышăннă. (ТАСС).

44 пин тенкĕ доход

Пахта-Абад районĕнчи (Узбек ССР) колхозсем пысăк тухăçлă çĕрмамăкĕ пухса илеççĕ. Кӳрбанăв комсомолĕц бригади гектартан 79-шар центнĕр çĕрмамăкĕ пухса илнĕ. Анчах ку пĕтĕмĕшпех мар-ха. Стахановĕцсем комсомол XX çул тултарнă йатпа тата Октябĕрти Социалисăмлă Аслă революци XXI çул тултарнă йатпа гектартан 100—120-шер центнĕр пухса илме сăмах панă.

Районри колхозсем 60 мĕлйун тенкĕрен кайа мар доход илеççĕ. „Кзыл-Кахраман" колхозри Рузыйĕв стахановĕц çемйи кăçал 44.438 тенкĕ илет, Кулийĕв йулташ çемйи—37.800 тенкĕ.

Районри миллионер-колхозсен шучĕ пĕлтĕрхипе танлаштарсан икĕ хут ӳснĕ. (ТАСС).

Пĕтĕм тĕнчери ыйтусем тăрăх

Мĕншĕн-ха Полъшăпа Венгри пĕрлештернĕ чикĕсем тăвасшăн?

Гитлĕр çарĕсем Судет облăçĕн территорийĕ çине пырса кĕриччен нумай малтан, фашисла çĕршывсем—Полъшă тата Венгри Чехословакин чылай районĕсене хăйсен çумне пĕрлештерме ыйтрĕç.

Тăватă державăн (Англи, Франци, Германи тата Итали) Мӳнхенри конференцийĕ Гитлĕрăн йут çĕршывсене туртса илес шутпа лартнă требованийĕсене пĕтĕмĕшпех пурнăçа кĕртрĕ, Чехословаки правительствине Полъшăпа Венгри каларса тăратнă „тавлашулă" территори ыйтăвĕсене вĕсемпе „тӳррĕмех каласса" татса пама хушрĕ. Çакăн хыççăн, Судет облăçне çухатнипе пĕр вăхăтра пекех, Чехословаки Тешин Силезийĕсĕр тăрса йулчĕ, ăна Полъшă туртса илчĕ. Венгри требованийĕсемпе Полъшăн çĕнĕ требованийĕсем çакăн пек: вĕсем Чехословакин калама çук пысăк территорине (вăл шута пĕтĕм Закарпат Украини кĕрет) туртса илесшĕн.

Закарпат Украинине Полъшăпа Венгри пĕр-пĕрин хушшинче пайласшăн, вара пĕрлештернĕ чикĕ туса хурасшăн.

Ĕç акă мĕнре. Хальхи вăхăтра Полъшăпа Венгри фашисла Германипе „туслă" пурăнаççĕ пулсан та, вĕсем çакна пит лайăх ăнланаççĕ: вăл „туслăх" пит те шанчăксăр, пĕр-пĕр илемлĕ кун Полъшăпа Венгри хăйсем те фашисла Германи çăварне кĕрсе ӳкме пултараççĕ. Акă мĕншĕн ĕнтĕ вĕсем пĕрлештернĕ чикĕ туса, вăрçă сойузĕ туса хăйсен позицийĕсене вăйлатасшăн тăрăшаççĕ.

Полъшăпа Венгри хăйсен планĕсене пурнăçа кĕртме Италирен пулăшу ыйтнă, Итали вĕсене пулăшма пулнă. Çакăнпа пĕрлех Полъшă Полъшă-Венгри сойузĕ çумне Румынийе те йавăçтарма хăтланса пăхнă, Закарпат Украинине пайланă çĕрте Румынийе те пĕр пай касса пама пулнă. Çак тĕллевпе ĕнтĕ Полъшăн йут çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Бек çак кунсенче Румынийе кайса килнĕ. Анчах Румынийе çав сойуза кĕртме май килмен.

Полъшăпа Венгри хушшинче пĕрлештернĕ чикĕ тума чăрмантарса, фашисла Германи „никама пăхăнса тăман" Закарпат Украини туса хума, вара Совет Украинине хирĕç ишĕлтерӳлĕ ĕçсем тăвас ĕçре Закарпат Украинипе усă курма шутлать. Кунта çакна манас пулмаст: Полъшăпа Венгри Закарпат Украинине туртса илме шутласа хунă планăн тĕллевĕ те—Совет Сойузне хирĕçле ĕçсем тăвасси пулса тăрать.

Судет облăçĕнчи фашисла террор

Судет облăçĕн Германи тытса илнĕ тĕрлĕ округĕсенчен демократилĕ халăхсене хирĕç фашисла террор ӳссе пыни çинчен çĕнĕ хыпарсем пĕлтереççĕ.

Лейтмериц хулинчен çапла пĕлтереççĕ: „Хулара продоволъстви таварĕсем çитмеççĕ. Пур продуктăсен хакĕ те икĕ хут ӳсрĕ. Хула таврашĕнчи йалсенче фашиссем кашни кунах хресченсен вылъăхчĕрлĕхĕсене туртса илеççĕ. Казармăсемпе шкулсене салтаксем йышăннă, кусемсĕр пуçне, уйрăм çынсен çурчĕсене те йышăннă.

Пасарсенче тарма ĕлкĕрнĕ фашиссене хирĕçле çынсен вăрăм спискисене çакса хунă. Спискăсемпе пĕрлех çав çынсене тытса паракансене премисем пани çинчен пĕлтерсе çырнă.

Хула çыннисем хытă кулъанаççĕ. Гитлĕрăвĕцсем улталанă чехсемпе нимĕçсем йаланах пĕр йăпала çинчен шухăшлаççĕ: „мĕнле те пулсан, часрах Чехословакине тухса кайасчĕ", теççĕ вĕсем.

Нумай хуласенчен Гестапо çыннисемпе генлейнла штурмовиксем фашиссене хирĕçле çынсене мăшкăласа асаплантарни çинчен пĕлтереççĕ.

Клестерле хулинче шкул çуртĕнчен тĕрме туса хунă. Октябĕрĕн 16-мĕшĕнче 64 çынна тĕрмене илсе пынă. Вăл çынсене допрос тăвакансем асаплантарса пĕтернĕ. Кашнине 30-шар хут чĕн пушăпа çаптарнă. Вĕсенчен иккĕшĕ çав тери тертлĕ асаплăха тӳсеймесĕр малтанхи каçах вилнĕ. Октябĕрĕн 17-мĕшĕнче арĕсленĕ çынсене пурне те çуран уттарса Каден хулине ăсатнă, унта вĕсене вырăнти тĕрмене хупса лартнă. Арĕсленĕ çынсене илсе пынă тĕле тĕрме умне 300 генлейнла штурмовиксем икĕ ĕрет тăрса тухнă. Арĕсленĕ çынсене çав штурмовиксем хушшинчен илсе тухнă. Генлейнла штурмовиксем фашисăма хирĕçле çынсем çине сурнă тата ытти майсемпе мăшкăласа кулнă. Каден тĕрминче те допрос тунă чухне хĕненĕ.

Арĕсленĕ çынсене Каденрен Хемница ăсатнă. Унта каллех допрос тунă. Допросра çынсене çтена çумнеле пăхтарса тăратнă. Фашиссен кăмăлне каймала мар панă кашни ответ хыççăн çтена çумне пуçпа çаптарнă.

Фашисăма хирĕçле çынсене нумайĕшне арĕсленĕ хыççăн персе пăрахаççĕ йе тата вĕлеричченех хĕнеççĕ. Брӳкс хулинче пĕр 16 çулхи çамрăка фашисла йалава шкул çурчĕ çинчен илсе пăрахнăшăн çынсем умĕнчех хĕнесе вĕлернĕ.

Октябĕрĕн 18-мĕшĕнче фашисăма хирĕçле рабочине Ритнĕре персе пăрахнă.

(ТАСС).

Пĕтĕм Сойузри Коммуниссен (большевиксен) Партин

ИСТОРИЙĔ

ПСК(б)П Тĕпкомĕн Комиççийĕ редакциленĕ. **КĔСКЕ КУРС.** **ПСК(б)П Тĕпкомĕ ырланă. 1938 ç.**

IV-мĕш сыпăкăн малали

2. Диалектикăлă тата историлĕ материалисăм çинчен*)

Çак ыйтăва çутатса парасси йулат: мĕне пĕлтерессĕ-ха, историлĕ материалисăм йенчен пăхсан, „обшчĕствăн материалљнăй пурнăç условисем“, йулашки шутран обшчĕствăн сăн-сăпатне, унăн идейисене, шухăшĕсене, политикăлă учреждениссене тата ыттисене палăртса тăраканскерсем?

Чăнах та, —мĕн-ха вăл „обшчĕствăн материалљнăй пурнăç условийĕсем“, мĕнле-ха вĕсен уйрăм паллисем?

Сăмах та çук, „обшчĕствăн материалљнăй пурнăç условисен“ ăнланăвне, пуринчен малтан, обшчĕствă тавра тăракан природă, географилĕ среда кĕрет; географилĕ среда обшчĕствăн материалљнăй пурнăçĕн кирлĕ тата йаланхи условийĕсенчен пĕри пулса тăрат тата, паллах, обшчĕствă аталанăвне влийани парат. Обшчĕствă аталанăвĕнче географилĕ средан ролĕ мĕнле-ха? Географилĕ среда обшчĕствăн сăнсăпатне, çынсен обшчĕствăлă стройĕн характĕрне, пĕр стройран тепĕр стройа куçнине палăртса тăракан тĕп вăй пулса тăмаст-и?

Историлĕ материалисăм ку ыйту çине хирĕçле ответ парат.

Географилĕ среда, сăмах та çук, обшчĕствă аталанăвĕн йаланхи тата кирлĕ условисенчен пĕри пулса тăрат тата, паллах, обшчĕствă аталанăвне влийани парат, —вăл обшчĕствă аталанса пырассине хăвăртлатат йе вăрахлатат. Анчах унăн влийанийĕ татса паракан влийани пулса тăмаст, мĕншĕн тесен, обшчĕствă улшăнăвĕсемпе аталанăвĕ географилĕ среда улшăнăвĕсемпе аталанăвĕнчен танлаштармала марах хăвăрт пулса пырат. Виçĕ пин çул тăршшĕнче Йевропăра виçĕ тĕрлĕ обшчĕствăлă строй улшăнса илме ĕлкĕрнĕ: первобытнăй-обшчинăлă строй, рабовладељчески строй, феодаљнăй строй, тата Йевропăн хĕвелтухăç пайĕнче, ССР Сойузĕнче, тăватă тĕрлĕ обшчĕствăлă строй та улшăннă. Çав вăхăтрах, çак тапхăрта Йевропăра географи условийĕсем йе пачах улшăнман, йе çав тери сахал улшăннă, вĕсем çинчен географи каласшăн та мар. Ăна ăнланмала та. Географилĕ средана мĕн чухлĕ те пулин пысăккăн улшăнма мĕлйуншар çулсем кирлĕ, çав вăхăтрах çынсен обшчĕствăлă стройне улшăнма темиçе çĕршер çул йе пĕр-икĕ пин çул хушши те çителĕклĕ.

Анчах çакăнтан вара ака мĕн тухса тăрат: географилĕ среда обшчĕствăла аталанувăн тĕп сăлтавĕ, **татса паракан** сăлтавĕ пулма пултараймаст, мĕншĕн тесен вуншар пин çул хушши улшăнмасăр тăраканни çĕршер çул хушшинче тĕпрĕн улшăнса илекеннин аталанăвĕшĕн тĕп сăлтав пулма пултараймаст.

Паллах, малала, „обшчĕствăн материалљнăй пурнăç условисен“ ăнланăвне, çавăн пекех, халăх йышĕ ÿссе пыни, халăх йышĕ мĕн таран çăра пулни кĕрет, мĕншĕн тесен çынсем обшчĕствăн материалљнăй пурнăç условийĕсен кирлĕ елеменчĕ пулса тăраççĕ, тата палла хисеп таран çынсем пулмасан обшчĕствăн нимĕнле материалљнăй пурнăçĕ те пулма пултараймаст. Халăх йышĕ ÿссе пыни çынсен обшчĕствăлă стройĕн характĕрне палăртса тăракан тĕп вăй пулса тăмаст-и?

Историлĕ материалисăм ку ыйту çине те хирĕçле ответ парат.

Паллах, халăх йышĕ ÿсни обшчĕствă аталанăвне хăйĕн влийанине парат, обшчĕствăн аталанăвне хăвăртлатат йе вăрахлатат, анчах вăл обшчĕствă аталанăвĕн тĕп вăйĕ пулма пултараймаст, тата унăн влийанийĕ обшчĕствă аталанăвĕнче **татса паракан** влийани пулма пултараймаст, мĕншĕн тесен, халăх йышĕ ÿсни хăй кăна çаксене ăнлантарма кирлĕ çăраççине памаст: мĕншĕн çак обшчĕствăлă строй, мĕнле те пулсан урăх йышши обшчĕствăлă стройпа мар, шăпах çавçав йышши çĕнĕ обшчĕствăлă стройпа улшăнат, мĕншĕн первобытнăй-обшчинăлă строй—рабовладељчески стройпа, рабовладељчески строй—феодаљнăй стройпа, феодаљнăй строй—буржуалă стройпа, мĕнле те пулсан урăхла стройпа мар, улшăнат.

Халăх йышĕн ÿсĕмĕ обшчĕствăлă аталанăвăн татса паракан вăйĕ пулса тăрас пулсан, халăх йышĕ ытларах çăра пулни çавăн пекех обшчĕствăлă стройăн ытларах çÿлте тăракан сăнарне обйазательнă туса хумала пулнă пулĕччĕ. Анчах, ĕçре апла пулни курăнмаст. Халăх йышĕ Китайра Америкăри Пĕрлешÿлĕ Штатсенчинчен тăватă хут ытла çăрарах, анчах та Америкăри Пĕрлешÿлĕ Штатсем, обшчĕствăлă аталану йенчен илсен, Китайран çÿлте тăраççĕ, мĕншĕн тесен Китайра çаплах çурмафеодаљнăй строй пуçпулса тăрат, çав вăхăтрах Америкăри Пĕрлешÿлĕ Штатсем тахçанах ĕнтĕ капиталисăм аталанăвĕн çÿлĕ сыпăкне çитсе тăнă. Халăх йышĕ Белгире Америкăри Пĕрлешÿлĕ Штатсенчинчен 19 хут çăрарах, ССР Сойузĕнчинчен 26 хут çăрарах, анчах та Америкăри Пĕрлешÿлĕ Штатсем, обшчĕствăлă аталану йенчен илсен, Белгирен çÿлте тăраççĕ, ССР Сойузĕнчен вара Белги пĕрпĕтĕм историлĕ епохă чухлех кайа йулнă, мĕншĕн тесен Белгире капиталисăмлă строй пуç пулса тăрат, çав вăхăтрах ССР Сойузĕ капиталисăмлă стройа пĕтерсе, хăй патĕнче социалисăмлă строй туса хунă.

Çакăнтан вара ака мĕн тухса тăрат: халăх йышĕн ÿсĕмĕ обшчĕствă аталанăвĕн тĕп вăйĕ, обшчĕствăлă стройăн характĕрне, обшчĕствăн сăн-сăпатне **палăртса паракан** тĕп вăй пулса тăмаст, пулма та пултараймаст.

Апла пулсан, обшчĕствăн материалљнăй пурнăç условисен системинче обшчĕствă сăн-сăпатне, обшчĕствăлă стройăн характĕрне, обшчĕствă пĕр стройран тепĕр стройа аталанса пынине палăртса паракан тĕп вăй мĕнре-ха?

Историлĕ материалисăм çакăн пек вăй тесе—çынсене пурăнма кирлĕ **пурнăç средствисене тупса тăвас меслете**, обшчĕствăна пурăнма тата аталанма кирлĕ **материалљнăй ырлăхсене**—апатçимĕç, тумтире, урана тăхăнмалисене, çуртйĕре, хутмалисене, производствă хатĕрĕсене тата ыттисене **тупса тăвас меслете** шутлат.

Пурăнас тесен—апат-çимĕç, тумтир, урана тăхăнмалисем,çуртйĕр, хутмалисем т. ыт. кирлĕ, çак материалљнăй ырлăхсем пулччăр тесен—вĕсене тăвас пулат, вĕсене тăвас тесен—апат-çимĕç, тумтир урана тăхăнмалисем, çуртйĕр, хутмалисем т. ыт. тăвас çĕрте çынсем усă куракан производствă хатĕрĕсем пулмала, çак хатĕрсене тума пĕлмеле, çак хатĕрсемпе усă курма пĕлмеле.

Материалљнăй ырлăхсем тăвас çĕрте усă куракан **производствă хатĕрĕсем**, производствă хатĕрĕсене ĕçе йаракан, **паллă производствăлă опытсем тата ĕç хăнăхăвĕсем** тăрăх материалљнăй ырлăхсем тăвакан **çынсем**—çак елементсем пурте пĕрле обшчĕствăн **производитељнăй вăйĕсем** пулса тăраççĕ.

Анчах та производитељнăй вăйсем производствăн пĕр йенĕ кăна, производствă меслечĕн пĕр йенĕ кăна пулса тăраççĕ, çав йен материалљнăй ырлăхсем тăвас çĕрте усă куракан природă предмечĕсемпе тата вăйĕсемпе çынсем мĕнле хутшăнса тăнине кăтартса парат. Производствăн тепĕр йенĕ, производствă меслечĕн тепĕр йенĕ—производствă процесĕнче çынсем пĕр-пĕринпе хутшăнса тăни, çынсен **производствăлă хутшăнăвĕсем** пулаççĕ. Çынсем природăпа кĕрешнĕ çĕрте, природăпа усă курса материалљнăй пурлăхсем тунă çĕрте пĕр-пĕринчен уйрăм мар, пĕр-пĕринчен уйăрăлса тăракан пĕччен çын пулса мар, пĕрлешсе, группăсемпе, обшчĕствăсемпе ĕçлеççĕ. Çавăнпа та производствă йаланах тата пур условисенче те **обшчĕствăлă** производствă пулса тăрат. Материалљнăй ырлăхсем тунă çĕрте çынсем производствă ăшĕнче хăйсем хушшинчи пĕр-пĕринчен килекен ку йе çав хутшăнусене, ку йе çав производствăлă хутшăнусене тăваççĕ. Çак хутшăнусем експлуататцинчен ирĕклĕ çынсем пĕрле ĕçлес, пĕр-пĕрне пулăшас йышши хутшăнусем пулма пултараççĕ, вĕсем пĕрисем пуç пулса тăрас теприсем пăхăнса тăрас хутшăнусем пулма пултараççĕ, вĕсем тата, йулашкинчен, производствăлă хутшăнусен пĕр форминчен тепĕр формине куçнă чухнехи йышши хутшăнусем пулма пултараççĕ. Анчах та, производствăлă хутшăнусен характĕрĕ кирек йепле пулсан та—йаланах тата пур йышши стройсенче те—вĕсем, обшчĕствăн производитељнăй вăйĕсем пекех, производствăн кирлĕ елеменчĕсем пулса тăраççĕ.

„Производствăра, тет Маркс, çынсем природăна çеç мар, тата пĕр-пĕрне те улшăнтараççĕ. Вĕсем пĕрле ĕçлеме, хăйсен ĕçне пĕр-пĕринпе улăштарма паллă майпа пĕрлешмесĕр йапаласем туса кăларма пултараймаççĕ. Йапаласем туса кăларас тесе, çынсем паллă çыхăнусене тата хутшăнусене кĕрсе пыраççĕ, çак обшчĕствăлă çыхăнусемпе хутшăнусем урлă кăна çынсем природăпа хутшăнса тăрасси пулат, производствă пулат“ (**К. Маркс и Ф. Энгельс**, т. V, стр. 429).

Çапла вара, производствă, производствă меслечĕ обшчĕствăн производитељнăй вăйĕсене те, çавнашкалах тата çынсен производствăлă хутшăнăвĕсене те çавăрса илет, çапла майпа вăл материалљнăй ырлăхсем тăвас процесра вĕсен пĕрлĕхне вырнаçтарса тăраканни пулат.

Производствă **уйрăмлăхĕсенчен пĕри** вăл ака мĕнре тăрат: производствă нихăçан та пĕр вырăнта нумай вăхăт хушши чарăнса тăмаст тата йаланах улшăнса аталанса пырат, çавăнпа пĕрлех тата производствă меслетĕнчи улшăнусем пурпĕрех пĕтĕм обшчĕствăлă стройа, обшчĕствăлă идейасене, политикăлă шухăшсене, политикăлă учреждениссене улăштараççĕ, — пĕтĕм обшчĕствăлă тата политикăлă уклада çĕнетсе урăхлатаççĕ. Аталанăвăн тĕрлĕ сыпăкĕсенче çынсем производствăн тĕрлĕ меслечĕсемпе усă кураççĕ, йе, тÿрех каласан, —тĕрлĕ майпа пурăнаççĕ. Первобытнăй обшчина вăхăтĕнче производствăн пĕр йышши меслечĕ пулат, чуралăх вăхăтĕнче производствăн тепĕр йышши меслечĕ пулат, феодалисăм вăхăтĕнче — производствăн виççĕмĕш йышши меслечĕ т. ыт. те. Çакна май çынсен обшчĕствăлă стройĕ те, вĕсен духовнăй пурнăçĕ, вĕсен шухăшĕсем, вĕсен политикăлă учреждениййĕсем те тĕрлĕрен пулаççĕ.

Обшчĕствăн производствă меслечĕ мĕнле, — тĕпрен илсен обшчĕствă хăй те çавăн пек, унăн идейисемпе теорийĕсем, политикăлă шухăшĕсем, учреждениссем те çавăн пек.

Йе, тÿрех каласан: çынсен пурнăç майĕ мĕнле, — вĕсен шухăшĕсен майĕ те çавăн пек.

Ку вăл çакна пĕлтерет: обшчĕствă аталанăвĕн историйĕ вăл, пуринчен малтан, производствă аталанăвĕн историйĕ, производствăн ĕмĕрсем хушшинче пĕрне пĕри улăштарса пыракан меслечĕсен историйĕ пулат, производитĕлнăй вăйсемпе çынсен производствăлă хутшăнăвĕсен аталанăвĕн историйĕ пулса тăрат.

Çапла ĕнтĕ, обшчĕствăлă аталанăвăн историйĕ—вăл çавăнпа пĕрлех материалљнăй ырлăхсене тăвакансен хăйсен историйĕ, ĕççынни массисен историйĕ, çав ĕççынни массисем производствă процесĕн тĕп вăйĕсем пулса тăраççĕ тата обшчĕствăна пурăнма кирлĕ материалљнăй ырлăхсем тăвассине пурнăçа кĕртсе пыраççĕ.

Çапла ĕнтĕ, историлĕ наукă, вăл чăн-чăн наукă пулас тет пулсан, обшчĕствăлă аталанăвăн историне текех корољсемпе полководецсен ĕçĕсем вырăнне, государствăсене „çĕнсе илекенсемпе“ „парăнтаракансен“ ĕçĕсем вырăнне хума пултараймаст, йалтах урăхла, вăл наукăн, пуринчен малтан, материалљнăй ырлăхсене тăвакансен историйĕ, ĕççынни массисен историйĕ, халăхсен историйĕ тĕлĕшпе ĕçлемеле.

Çапла ĕнтĕ, обшчĕствă историйĕн саккунĕсене вĕренмели çăраççине çынсен пуçĕсенче мар, обшчĕствă шухăшĕсемпе идейисенче мар шырамала, производствăн кашни историлĕ тапхăрта обшчĕствă усă куракан меслетĕнче,—обшчĕствă економикинче шырамала.

Çапла ĕнтĕ, историлĕ наукăн чи тĕп задачи вăл — производствă саккунĕсене, производитĕлнăй вăйсемпе производствăлă хутшăнусен аталанăвĕн саккунĕсене, обшчĕствăн економикăлă аталанăвĕн саккунĕсене вĕренесси тата уçса палăртасси пулса тăрат.

Çапла ĕнтĕ, пролетариат партийĕн, вăл чăн-чăн парти пулас тет пулсан, пуринчен малтан производствă аталанăвĕн саккунĕсене, обшчĕствăн економикăлă аталанăвĕн саккунĕсене вĕренсе пĕлмеле.

Çапла ĕнтĕ, политикăра йанăш тăвас мар тесен, пролетариат партийĕн хăйĕн программине тунă чухне те, çавăн пекех тата хăйĕн практикăлă ĕçĕнче те, пуринчен малтан производствă аталанăвĕн саккунĕсене, обшчĕствăн економикăлă аталанăвĕн саккунĕсене асра тытса ĕçлемеле.

Производствăн **иккĕмĕш уйрăмлăхĕ** ака мĕнре тăрат: производствăн улшăнăвĕсемпе аталанăвĕ йаланах производитĕлнăй вăйсен улшăнăвĕсемпе аталанăвĕнчен, пуринчен малтан производствă хатĕрĕсен улшăнăвĕсемпе аталанăвĕнчен пуçланаççĕ. Производитĕлнăй вăйсем, çапла вара, производствăн чи хусканулă та революцилĕ елеменчĕ пулсе тăраççĕ. Малтан обшчĕствăн производитĕлнăй вăйĕсем улшăнса аталанаççĕ, унтан вара, çав улшăнусене **пула** тата **вĕсене май** çынсен производствăлă хутшăнăвĕсем, çынсен економикăлă хутшăнăвĕсем улшăнаççĕ. Ку вăл, çапах та, производствăлă хутшăнусем производитĕлнăй вăйсен аталанăвĕ çине влийани паманнине тата производитĕлнăй вăйсем производствăлă хутшăнусене пăхăнса тăманнине пĕлтермест-ха. Производитĕлнăй вăйсем аталаннине май аталанса пырса, производствăлă хутшăнусем хăйсен черечĕпе производитĕлнăй вăйсен аталанăвне, ăна хăвăртлатса йе вăрахлатса, улшăнтараççĕ. Кунта тата çакна палăртма кирлĕ: производствăлă хутшăнусем производитĕлнăй вăйсен ÿсĕмĕнчен ытла нумай вăхăт хушши йулса пыма тата унпа хирĕçÿре пулма пултараймаççĕ, мĕншĕн тесен производствăлă хутшăнусем производитĕлнăй вăйсен характĕрĕпе, состойанийĕпе килĕшÿлĕн пулса пыраççĕ пулсан çеç тата производитĕлнăй вăйсене ирĕклĕн аталанма май параççĕ пулсан çеç производитĕлнăй вăйсем кирлĕ таранах çителĕклĕ аталанса пыма пултараççĕ. Çавăнпа та, производствăлă хутшăнусем производитĕлнăй вăйсен аталанăвĕнчен тепле йулса пырсан та, вĕсен малтан йе кайран производитĕлнăй вăйсен характĕрĕпе килĕшÿлĕ пулса пымала вĕсем чăнах та çавăн пек килĕшÿлĕ пулса пыраççĕ те. Апла пулмасан, производствă çиçтеминче производитĕлнăй вăйсемпе производствăлă хутшăнусен пĕрлĕхĕ тĕпренех пăсăлнă пулĕччĕ, производствă пĕтĕмĕшренех уйăрăлса тăрĕччĕ, производствă кризисĕ пулнă пулĕччĕ, производитĕлнăй вăйсем арканĕччĕç.

Производствăлă хутшăнусем производитĕлнăй вăйсен характĕрĕпе килĕшсе тăманнин примерĕ, вĕсем хушшинчи конфликтăн примерĕ капиталисăмлă çĕршывсенчи економикăлă кризиссем пулса тăраççĕ, унта производствă средствисем уйрăм-капиталисла харпăрлăх пулни производствă процесĕн обшчĕствăлă характĕрĕпе, производитĕлнăй вăйсен характĕрĕпе калама çук пысăк килĕшменлĕхре тăрат. Çавăн пек килĕшменлĕхĕн резуљтачĕ—производитĕлнăй вăйсем арканасси патне илсе пыракан економикăлă кризиссем пулса тăраççĕ, кунпа пĕрлех çав килĕшменлĕх хăй социаљнăй революцин економикăлă никĕсĕ пулса тăрат, çав социаљнăй революцин ĕçĕ—хаљхи производствăлă хутшăнусене çĕмĕрсе, производитĕлнăй вăйсен характĕрĕпе килĕшÿлĕ пулса пыракан çĕнĕ производствăлă хутшăнусем тăвасси пулат.

Тата йалтах урăхла, производствăлă хутшăнусем производитĕлнăй вăйсен характĕрĕпе пĕтĕмпех килĕшÿлĕ пулса пынин примерĕ—ССР Сойузĕнчи халăх хуçалăхĕ пулса тăрат, кунта производствă средствисем обшчĕствăлă харпăрлăх пулни производствă процесĕн обшчĕствăлă характĕрĕпе пĕтĕмĕшпех килĕшсе тăрат, кунта çакна пула вара економикăлă кризиссем те, производитĕлнăй вăйсем арканни те çук.

Çапла вара, производитĕлнăй вăйсем производствăн чи хусканулă та революцилĕ елеменчĕ çеç мар пулса тăраççĕ. Вĕсем çакăнпа пĕрлех тата производствă аталанăвĕнче палăртса тăракан елемент пулса тăраççĕ.

Производитĕлнăй вăйсем мĕнле,—производствăлă хутшăнусем те çавăн пек пулмала.

Производитĕлнăй вăйсен состойанийĕ—çынсем хăйсене кирлĕ материалљнăй ырлăхсене производствăн мĕнле хатĕрĕсемпе тăваççĕ текен ыйту çине ответлет пулсан, производствăлă хутшăнусен состойанийĕ вара тепĕр ыйту çине ответлет: **производствă средствисем** (çĕр, вăрмансем, шывсем, çĕр айĕнчи пуйанлăхсем, чĕрĕ материалсем, производствă хатĕрĕсем, производствă çурчĕсем, çулсемпе çыхăну средствисем т. ыт. те) кам аллинче тăраççĕ, производствă средствисем кам аллинче тăраççĕ—пĕтĕм обшчĕствă аллинче-и, йе вăл средствăсемпе ытти çынсене, группăсене, классене експлуатациленĕ çĕрте усă куракан уйрăм çынсен, группăсен, классен аллинче тăраççĕ.

Ака авалхи вăхăтсенчен пуçласа пирĕн вăхăтри кунсем патне çитиччен производитĕлнăй вăйсем мĕнле аталанса пынине кăтартакан схемăлă картинă. Чултан тунă кăнттам хатĕрсенчен ухăпа çĕмренсем çине куçни тата çавна май ухутниксем майлă пурăнассинчен выљăхсене алла хăнăхтарасси çине тата первобытнăй йĕркери выљăх-чĕрлĕх ĕрчетесси çине куçни; чулран тунă хатĕрсенчен металлран тунă хатĕрсем (тимĕр пуртă, тимĕр касала сухапуç т. ыт.) çине куçни тата, çавна май, ÿсен-тăрансем акса тăвасси çине тата çĕрĕçĕ çине куçни; материалсене ĕçлесе хатĕрлемели металлран тунă хатĕрсене малашне лайăхлатса пыни, тимрĕç вĕркĕчи çине куçни, чÿлмек производстви çине куçни тата, çавна май, ремесла аталанса пыни, ремесла çĕрĕçĕнчен уйăрăлни; хăйне уйрăм ремесла производстви тата кайран мануфактура производстви аталанса пыни; производствăн ремесла хатĕрĕсенчен машинă çине куçни тата ремесленнă-мануфактурнăй производствăран машинăлă промышлĕннăç пулса пыни; машинăсен системи çине куçни тата кучухнехи машинăлă шултра промышлĕннăç пуçланса кайни. çакăн пек ĕнтĕ етемлĕх историн тăршшĕнче обшчĕствăн производитĕлнăй вăйĕсем аталанса пынине кăтартакан чылайах туллимар пĕтĕмĕшле картинă. Çакна ăнланмала та: производствă хатĕрĕсем аталанса тата лайăхланса пырассине производствăпа хутшăнса тăракан çынсем пурнăçа кĕртсе пынă, çакă вăл çынсенчен уйрăм пулса пыман,—çапла вара, производствă хатĕрĕсем улшăнса аталаннипе пĕрлех производитĕлнăй вăйсен чи кирлĕ елеменчĕ пулса тăракан çынсем те улшăнса тата аталанса пынă, вĕсен производствăлă опычĕ, вĕсем ĕçе хăнăхни, вĕсем производствă хатĕрĕсемпе усă курма пĕлни те улшăнса тата аталанса пынă.

Истори тăршшĕнче обшчĕствăн производитĕлнăй вăйĕсем улшăнса тата аталанса пынă май— çынсен производствăлă хутшăнăвĕсем, вĕсен економикăлă хутшăнăвĕсем те улшăнса тата аталанса пынă.

(ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсĕн малали „Чăваш Коммунĕ“ хаçатăн çитес номĕрĕсенче пичетленет).

*) „Диалектикăлă тата историлĕ материалисăм çинчен“ уйрăмăн пуçламăшĕ „Чăваш Коммунĕ“ 244, 245-мĕш №-сенче пичетленнĕ.

Глеб Успенский

Выроссен иртнĕ ĕмĕрти паллă писателĕ-демократ Глеб Иванăвич Успенский çурални 95 çул тулчĕ,—вăл 1843 çулти октăберĕн 25-мĕшĕнче Тула хулинче пĕр чиновник çемйинче çуралнă.

1861 çулта Успенский, гимназирен вĕренсе тухнă хыççăн, Петербургри университета вĕренме кĕнĕ. Часах студентсен хушшинче пăлхану пуçланса кайнă. Университет хупăннă. Тĕрĕссипе каласан, Успенский çав университетра вĕренесшĕн ытлашшийех хыпăнса çунман. Ăна пуринчен ытла революцилĕ идейă, обшчĕствă пурнăçне çĕнетсе урăхлатас ĕç интереслентернĕ.

Глеб Успенский Чернышевскипе Доброљубăвăн çамрăк современникĕ пулнă. Вĕсемпе вăл куçкĕретĕн тăрса калаçман пулин те хăйĕн чи хаклă учителĕсем вырăнне хурса хисепленĕ. Доброљубăв вилсен, Чернышевскине арĕслесен —вăл хăйĕн литературă ĕçне пуçăннă. Чернышевскипе Доброљубăв идейине Успенский çав тери çывăх тăнă.

Хăйĕн малтанхи произведенийĕсене Успенский „Современник“ тата „Русское слово“ журналсенче пичетлесе пынă. Анчах çак журналсене патша правителстви часах хупса лартнă. Вара Успенский хутран-ситрен ытти пĕчĕк журналсенче пичетлеме тытăннă. 1863 çулта çеç вăл „Отечественные записки“ журнал Некрасăв аллине куçсан çеç, çав журналăн йаланхи сотрудникĕ пулса тăнă.

Успенскин вăл вăхăтри произведенийĕсем хула пурнăçне, хула йалине кăтартнипе характĕрлă пулса тăраççĕ. Унăн произведенийĕсенче аманнă кивĕ пурнăç, вилĕм умĕнче тăракан пурнăç йалисен сăнлăхĕсем уçăмлăн курăнаççĕ. Çав сăнлăхсене Успенский пысăк маçтăрлăхпа, пурне те ĕнентерÿлĕн, витĕмлĕ сăмахсемпе кăтартса пама пĕлнĕ.

Пуринчен ытла унăн „Нравы Растеряевой улицы“ тата „Разорение“ йатлă очĕркĕсенче вилĕм умĕнче тăракан тискер пурнăçăн условийĕсемпе йалисем туллин сăнланса курăнаççĕ. Паллах, çав сăнлăхсемшĕн талантлă писатĕл, революцилĕ демократ Успенский хавхалансах савăннă. Киввине пĕтерсе вăл çĕннине аталантарас майсем шыранă. Иувлă патша режимне, патша пусмăрне, тĕттĕмлĕхе, ăссăрлăха, айванлăха Успенский чунган-чĕререн курайман. Вĕсене хирĕç, мĕн вăй çитнĕ таран, хайар кĕрешÿ пуçланă.

Малала туртăнакан интеллигенци хушшинче вăл вăхăтра народниксен идейи пуç пулса тăнă. Вĕсен идейи тĕрĕс мар, реакцилĕ, революци йухăмĕшĕн калама çук сийенлĕ идейă пулнă. Вĕсен шухăшĕпе, патшапа помешчиксен влаçне хресченсен вăйĕпе çеç те ишсе антарма май пур имĕш. Паллах, тĕрĕс мар шухăш. Хресченсем рабочи класпа, пуçласа вĕçне çитиччен революцилĕ класпа, таччăн çыхăнсассăн çеç, çав рабочи клас вĕсене йертсе пырсассăн çеç патшапа помешчиксене çĕнтерме пултарассине народниксем ăнланман. Тĕрĕссипе вĕсем хресченсен интересĕсене те тĕплĕн пĕлмен. Хресченсен тĕп вăйĕ вĕсен хыççăн кайма килĕшменнине кура, народниксем массăлă революцилĕ кĕрешÿрен питĕ те айакра пулнă, вĕсем террорисăм çулĕ çине тăнă. Çак террорисăм вăл революцишĕн кĕрешес ĕçре çав тери пысăк сийен кÿнĕ.

Глеб Успенский народниксен ĕçĕпе килĕшме пултарайман. Вăл халăхпа, халăх интересĕпе çывăххăн тăнă, революци йухăмĕ кунсерен вăйланса, хăватланса пырассине шаннă. 1870—73 çулсенче вăл икĕ хутчен йут çĕршывсене кайса çÿрене: Францире, Англире тата Çербире те пулнă. Париж коммунарĕсене Версаљ палачĕсем мĕнле асаплантарса вĕлернине вăл хăй куçĕпе курнă. Парижран çырнă çырăвĕсенче Успенский тискер кайăк чунлă версаљцăсене пĕтĕм чĕререн ылханат, коммунарсен хăйулăхĕпе, вĕсем халăх ĕçĕшĕн пурнăççене пама та хатĕр тăнипе хавхаланса мухтанат.

Глеб Успенский çамрăк чухнех йалти хресченсен пурнăçĕпе интересленнĕ, йал пурнăçне тĕплĕн вĕренсе çитесшĕн пулнă. Çак майпа вăл нумай вăхăт пурăнмалах йала куçнă. „Из деревенского дневника“ йатлă кĕнекери калавĕсенче вăл йал пурнăçне чăн пысăк художник куçĕпе пăхса тĕрĕссĕн сăнласа панă, народниксен иљљузийĕсене тĕпренех ишсе аркатнă. Çак калавсенчех вăл йалти хресченсен хушшинчи нумай тĕрлĕ киревсĕр йăласемпе тĕшмĕшлĕхе çав тери тĕлĕнмеле чăнлăх вăйĕпе, халăх писателĕ-реалисăн мĕн пур хĕрÿлĕхĕпе хирĕç тухса питленĕ. Чиркÿпе патша правителствин представителĕсем çав киревсĕр йăласемпе тĕшмĕшлĕхе халăх хушшине ытларах сарма, вăл йăласене аталантарса пыма тăрăшнă. Çакна вĕсем хутла пĕлмен халăха пушшех хăратса, халсăрлатса йарса хăйсене пăхăнтарасшăн туса пынă. Успенский çав йăласене хирĕç тăнă, чиркÿпе патша правителствин йалти представителĕсен ирсĕр ĕçĕсене пĕр хĕрхенÿсĕр тăрă шыв çине кăларса пынă.

Глеб Успенский çырнă произведенисене В. И. Ленин çав тери йуратса вуланă, вăл произведенисенчи тĕслĕхсемпе хăйĕн брошÿрисенче те усă курнă („Что такое „друзья народа“ т.ыт.те). Успенский çырнă произведенийĕсем халĕ те хăйсен пахалăхне çухатман, халĕ те вĕсем пысăк интереспе вуланаççĕ.

Глеб Успенский 1902 çулта Петербургра вилнĕ.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Отчотпа суйлав пухăвĕсен решенийĕсене пурнăçа кĕртнине тĕрĕслетпĕр

ПСК(б)П Тутаркас райкомĕ чылай вăхăт хушши парторгсен отчотне итлеменччĕ. Çавăнпа уйрăм коммуниссем Чăваш парторганизацин XIX конференци итогĕсене сӳтсе-йавнă пухура çак çитменлĕхе палăртса хăварчĕç.

Вăл çитменлĕхе пĕтерес май, ПСК(б)П райкомĕ хăйĕн ларăвĕсенче пур пуçламĕш парторганизацисен тата кандидат групписен руководителĕсен отчотне итлеме шутлаť.

Октăбĕрĕн 17-мĕшĕнче пулнă ларăвĕнче райком икĕ парторгăн отчотне итлерĕ. Отчота хатĕрлеме тата пуçламĕш парторганизаци хăйĕн отчотпа суйлав пухăвĕ хушса хăварнă решенисене мĕнле пурнăçа кĕртсе пынине тĕрĕслеме, ПСК(б)П райкомĕ хăйĕн инструкторне 5 кун малтан пуçламĕш парторганизацине йачĕ.

Отчотсене итленĕ хыççăн питĕ нумай çитменлĕхсем курăнчĕç. Акă, Калайкассинчи пуçламĕш парторганизаци тавра 6 комсомол организаци шутланаť. Çав организацисенчен 1938 çулта пĕр çынна та парти ретне илмен. Ку парторганизацинчех нумай вăхăт самокритикăпа критикă пулман. Çавăнпа „ударник“ колхозăн председателĕ кулак пулнă Александрăв, пуçламĕш парторганизаци çумĕнчи сочувствуйушчисен группинче тăрса, партине кĕме хатĕрленнĕ. Йалсовет председателĕнче чылай вăхăт хушши Клопов ĕçлет. Унăн çемйи çирĕп заданипе налог тӳлесе пурăннă, колхоза та кĕмен. Çавăн пек çынсем сăтăр тунине пула Калайкасси йалсоветĕнче пур ĕçсем те кайа йулма пуçланă.

Парторганизаци уйрăм коммуниссене çителĕклĕ пулăшу парса пыман. Сăмахран, „Марксист“ колхоз председателне Соловйовă йулташа пулăшу сахал пани палăрчĕ.

Кăтартнă çитменлĕхсем ПСК(б)П райкомĕ ку таранччен пуçламĕш парторганизацисене сахал пулăшу панинчен килнĕ.

Пуçламĕш организацинчи коммуниссем халљхи вăхăтра пурте ПСК(б)П историне вĕренеççĕ. Вĕреннĕ чухне ПСК(б)П райкомĕ çирĕплетнĕ пропагандис Дубровский тĕрĕс мар ăнлантарнисем пулнă. Халĕ пропагандис пулма Гаврилăв йулташа уйăрнă. Калайкассинчи пуçламĕш парторганизацинчи пек çитменлĕхсем урăх организацисенче те пур. ПСК(б)П райкомĕ çак çитменлĕхсене пĕтерессишĕн хыттăнах тăрăшаť.

Бирӳков,
ПСК(б)П райкомĕн çекретарĕ.

Çамрăк интеллигентсемпе начар ĕçленĕ

Шупашкарти спирт савăтĕнче комсомол пуçламĕш организацин отчотпа суйлав пухăвĕнче комитет отчочĕ тăрăх тухса калакансем нумай пулчĕç. Вĕсем комитет ĕçĕнчи çитменлĕхсене критиклерĕç.

— Комитет производствăра тата общĕствăлă ĕçсенче хăйсене палăртнă çамрăк рабочисене комсомол ретне илес тĕлĕшпе начар ĕçленĕ, — тет цех начаљникĕ, çамрăк комсомолĕц Захарăв йулташ. — Епĕ йанвар уйăхĕнчех комсомол ретне кĕме ыйту патăм. Комитет çекретарĕ пулнă Артемйĕвă йулташ ман ыйтăва 5 уйăх хушши хăй патĕнче тытрĕ. Хула комитечĕ те мана октăбĕр уйăхĕнче тин комсомол ретне йышăнчĕ.

Çамрăк комсомолка Немăвă йулташ комсомола çĕнĕрен илнисемпе начар ĕçлени çинчен каласа пачĕ.

— Мана комсомола илнĕренпе пĕр ĕç те хушмарĕç,—тет вăл.

Комитет комсомолĕцсене ĕç пани, вăл ĕççене мĕнле пурнăçа кĕртсе пынине тĕрĕслени пулман. Наумăв комсомолĕц рабочи çамрăкĕсене комсомола илес йенĕпе начар ĕçленине критиклерĕ.

Савăтра лайăх ĕçлекен комсомолĕцсем, рйадовой работницăран цех начаљникне çити ӳснĕ комсомолкăсемпе комсомолĕцсем сахал мар. Сăмахран, Хмарă тата Захарăв йулташсенех илес. Çавăн пекех бригадирсем тата аслă рабочисем пулса ĕçлекен комсомолĕцсем те чылай. Анчах комсомол комитечĕ ӳссе пыракан çамрăк интеллигенцине куллен пулăшса пыман, ку ыйту комитет ĕçĕн кун йĕркинчен йалтах тухса ӳкнĕ. Çавăн пекех партин пуçламĕш организаци те ку йенĕпе тивĕçлĕ пулăшу парса йертсе пыман. Уйрăм коммуниссем çамрăк реботницăсене, пысăкрах ĕçе куçарнă комсолĕцсене пулăшас вырăнне, кӳрентĕрнисем пулнă. Комсомолĕцсем Лукийанăвăн чунсăрлăхĕ çинчен уйрăмах нумай чаранса тăчĕç.

Комсомолкă Орловă чирлесе пурăннă вăхăтра Лукийанăв патне (вăл савăтăн технически директăрĕ) пулăшу ыйтма пынă. Лукийанăв çамрăк комсомолка-стахановкăна пулăшас вырăнне, çапла каласа хунă: „Пĕрмайах чирлетĕн пулсан пенçи çине куç, йе качча тух“, тенĕ. Çав Лукийанăвах Наумăв комсомолĕц хватер ыйтсан: „Хватер çук, савăтран тухса кай“, тенĕ.

Партин пуçламĕш организацийĕ çаксене пĕлсе тăнă. Анчах вăл комсомолăн пуçламĕш организацине пулăшма тивĕçлĕ ĕçсем туман. Лукийанăв та ку таранччен комсомолĕцсен ыйтăвĕсем çине çавăн пек киревсĕр пăхма пăрахман-ха.

Комсомолĕцсем комитетăн çĕнĕ составне ваљљи паха сĕнӳсем парса хăварчĕç.

Хуппăн (вăрттăн) сасăлса комитетăн çĕнĕ составне ĕçре палăрнă комсомолĕцсене: Ивановă, Степанăвă тата Наумăв йулташсене суйласа хăварчĕç.

М. М.

Малта пыракан комсомолĕцсем парти ретне кĕреççĕ

Ленин—Сталин партийĕ йертсе пынипе комсомол организацийĕсем хăйсен ретне халăх тăшманĕсенчен тасатас тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туса иртерчĕç. Бољшевиксен партин ĕçне вĕçĕ-хĕррисĕр парăнса ĕçлекен çĕнĕ актива йертсе пыракан ĕççене нумай лартрĕç. Ишлей районĕнче 1938 çулта кăна комсомолĕцсенчен 78 çынна йертсе пыракан ĕççене лартнă.

„Коммунист“ колхозра счетовод пулса ĕçленĕ В. Михайлăв й. халљ ПСÇЛКС Ишлей райкомĕн çекретарĕ пулса ĕçлет. В. Гуçков йулташа Буденный йачĕпе тăракан колхоз председателне суйланă т. ыт. те.

Ишлей районĕнче 1938 çулта ĕçре малта пыракан çамрăксем 362 çын комсомол ретне кĕчĕç, вĕсенчен хĕрачасем 78. Çамрăксене комсомол ретне илес тĕлĕшпе Буденный йачĕпе тăракан колхозри (çекретарĕ Гуçков), Йермакри (çекретарĕ Г. Игнатйĕв), Пикшикри (и. Ваçилйĕв) пуçламĕш организацисем аван ĕçлеççĕ. Вăл организацисенче политикăлă-массăлă ĕçе те аван туса пыраççĕ. Анчах чылай пуçламĕш организацисенче çамрăк комсомолĕцсене ĕçе йавăçтарасси йапăх пыраť. Çĕнĕ Шурча, Шуркасси, Мамка йалĕсенчи пуçламĕш организацисенче çамрăк комсомолĕцсене уйрăм порученисем памаççĕ, вĕренĕве те йавăçтармаççĕ.

Ишлей районĕнчи чи активлă комсомолĕцсем парти ретне кĕреççĕ. Комсомол райкомĕ хăйсен пултарулăхĕсене ĕçре кăтартнă комсомолĕцсемпе комсомолкăсене 44 çынна парти ретне кĕме рекомендацисем пачĕ.

Д. Михайлăвă,
ПСÇЛКС Ишлей райкомĕн политвĕренӳ пайĕн заведуйущчийĕ.

Колхозниксем конференци решенисене ырлаççĕ

ТУРХАН. Тури Пӳртлĕри „Ударный“ колхозри колхозниксем хăйсен пухăвĕнче Чăваш парторганизацин XIX конференци решенисене сӳтсе-йаврĕç.

Тухса каланă йулташсем вăл решенисене ырласа, тăшмансен сăтăрла ĕçĕсен йулашкисене пĕтерес тĕлĕшпе тата вăйлăрах ĕçлеме кирлине палăртрĕç.

Пуху, конференци решенисене ырласа, умра тăракан ĕççене пурне те вăхăтра пурнăçлама пулчĕ.

М. Лапшин.

МАНĂН УТĂМСЕМ

(Çамрăк педагог çырăвĕ)

Епĕ учитĕл ĕçĕнче иккĕмĕш çул ĕçлетĕп. Ленин—Сталин партийĕ, совет правитĕлстви тата пĕтĕм совет халăхĕ мана çамрăк ăрăва вĕрентсе коммунисла воспитани пама шанни—питĕ пысăк савăнăç.

1937 çулта çентăберĕн 1-мĕшĕнче епĕ пирвайхи хут класа кĕрсе, ачасем умне тăтăм. Малтанхи вăхăтсенче ĕçре нумай йăвăрлăхсем тĕл пулчĕç. Методикă тĕлĕшĕнчен уроксене тĕрĕсех иртерме пĕлеймен пирки ачасен ăнланассипе дисциплини тивĕçлĕ вырăнтах пулаймарĕ. Çавăнпа та программă вăхăтра пурнăçа кĕрейместчĕ. Епĕ йаланах çакăн пек ĕçлесе пыма йураманнине, педагогикăлă ăсталăха вĕренсе алла илме кирлине ăнланса илтĕм. Çавăнпа та мĕнпур вăйхала вĕренесси çине,—йăвăрлăхсене çĕнтересси çине хутăм. Час-часах шкулта нумай çул хушши ĕçленĕ учитĕлсенчен пулăшу ыйтаттăм. Методикă журналĕсем нумай вуларăм. Малтанхи вăхăтсенче вĕренӳ пайĕн пуçлăхĕ тата районри çутĕç пайĕн инструктăрĕсем те манăн уроксенчи чылай çитменлĕхсене палăртса, методикăлă кăтартусем пачĕç.

Кунсăр пуçне [illegible]кăна вĕренес тĕлĕшпе П[illegible]педучилищинче екстерн[illegible]парса, кашни уйăхрах унта м[illegible]лă консуљтацисене çӳрер[illegible]. Кăçал çулла пуçламĕш шкулăн методикипе педагогики тăрăх мĕн кирлине ăнаçлăнах парса татрăм.

Халĕ ĕнтĕ ачасене вĕрентсе воспитани парас ĕçре пысăк утăмсем пулни палăрчĕ. Урока мĕнле те пулин интереслĕрах, уроксене ачасемшĕн ăнланмала тата вĕсене интереслентермеле иртерме вĕренсе çитрĕм. Ачасем тĕн сийенлĕхне курайми пулса, тăван çĕршыва, Ленин—Сталин партине чунтан йуратакан пулса çитĕнеççĕ.

Шкулта ĕçленĕ вăхăтрах общĕствăлă ĕçе те активлăн хутшăнатăп. Кăçал хамăр шкулта пионерсен аслă вожатăйĕ пулса ĕçлетĕп. Шкулта 5 отрйад. Пионерсем пурте социалисăмлă ăмăртăва хутшăннă, вĕсем ленинла-сталинла комсомол 20 çул тултарнине „отлично“, „хорошо“ паллăсемпе кĕтсе илессишĕн кĕрешеççĕ.

Епĕ ленинла-сталинла комсомол 20 çул тултарнине пысăк парнепе кĕтсе илесшĕн. Манăн чи хаклă парне вăл—вĕрентӳпе воспитани ĕçне чи çӳлти вырăна лартни пулаť.

М. А. Ласточкинă.

9.785 тенкĕлĕх выљав укçи тӳленĕ

Ишекри (Ишлей районĕ) перекет касси ĕççыннисене Иккĕмĕш Пилĕкçуллăх (тăваттăмĕш çулхи кăларăм) займĕн пĕтĕм сакăр тиражĕпе 9.785 тенкĕ выљав укçи тӳленĕ. Кунсăр пуçне ССРС оборонине тĕреклетмели займ тăрăх 1.575 тенкĕ тӳленĕ.

А. Наумăв.

ПĔЧĔК ФЕЛИЕТОН

Кашăк

Шупашкарти столовăйсенче апатланас тесен, хупа пĕрле кашăк чиксе çӳремеле килет. Мĕншĕн тесен, столовăйсенче кашăк çителĕклĕ мар, çавăн пирки ик-виç сехет хушши черет кĕтсе ларас пулаť.

„Мĕншĕн-ха кашăк çитмест? Кашăк пит хаклă йапалах мар-çке“—тесе ыйтма пултараççĕ. Чăвашторгра ларакан ăслайсем пĕтĕм республике ваљљи пурĕ 200 кашăк илме зайавкă панă. Çав зайавкă тăрăх Мускавран 150 кашăк илнĕ те.

Столовăйсенче кашăк çитмей пирки йăвăç кашăксем туйанса пăхнă. Çук, ĕç тухмасť, апат çийекенсем йăвăç кашăкпа çийесшĕн мар, тимĕр кашăк ыйтаççĕ.

Чебторгăн столовăйĕнче ĕçлекен çынсем кашăк шыра-шыра ăнтанах кайнă. Ниçта та тупаймаççĕ. Хусана çыру йарса пăхаççĕ, унта та тупаймаççĕ. Ăçтан кашăк тупас? Ответ паракан çук.

Шырасан-шырасан пĕри кашăк ăçтан тупмалине чухласа илет.

— Ачасем, пирĕн вĕт складра 10 килограм тăхлан пӳр. Çав тăхланран кашăк хывтарас,—тет вăл.

— Чăнах та... Анчах ăçта хывтарăпăр? Пирĕн вĕт Шупашкарта кашăк хывакан савăт çук,—тет тепри.

— Епĕр вăл тăхлана Мускава ăсатăпăр. Унтан пире кашăк парĕç,—тет малтанхи, майĕ-айĕсене каллĕ-маллĕ шăлкаласа.

— Кама йарас Мускава кашăк хывтарма?

— Палла кама йарасси, Попов йулташа йарас пулаť. Вăл Мускав хулине лайăх пĕлет,—теççĕ иккĕн-виççĕн харăс.

Попов Мускава кашăк хывтарма кайма килĕшет:

— Анчах епĕ тăхлана хампа пĕрле илсе каймастăп,—тесе татса хураť.

— А мĕнле йарăпăр вара?

— Мĕнле? Наложенный платежпа йарăр. Епĕ ăна илĕп те вара кашăк хывакан савăта леççе парăп,—тет Попов.

Калаçсан-калаçсан килĕшеççĕ. Попов Мускава командировкăна тухса каяť. 10 кило тăхлана наложенный платежпа пуштă тăрăх йараççĕ.

Попов тахçанах Мускава çитнĕ пулĕ ĕнтĕ. Анчах тăхланĕ наложенный платежпа хăçан çитĕ-ши? Хăçан столовăйсенче кашăк пулĕ-ши? Ех, мăнтарăн кашăкĕ, мĕн чухлĕ чăрмав, мĕн чухлĕ тăкак сан пирки?

М. Н. ЧАЛДУН.

Йалсоветсем ăмăртса ĕçлеççĕ

Хĕрлĕ Чутай. Мишеркасси йалсовечĕ пĕрремĕшпе иккĕмĕш квартăлсенче финанс планне тултараймаи. Йалсоветпа колхоз активĕ колхозниксемпе йединоличниксем хушшинче ССР Сойуз Верховнăй Совечĕн Иккĕмĕш Çессийĕ йышăннă решенисене халăха ăнлантарсан, государствă умĕнчи пур парăмсене парса татнипе пĕрлех, йалсоветĕнче финанс ĕçĕнче те пысăк улшăну пулчĕ. Финанс çекци членĕсем Базранăв, Данилăв, Немцĕв тата налог агĕнчĕ Лысĕв йулташсем тăрăшса ĕçленипе йалсовет 3-мĕш квартăлти финанс планне 120 процент тултарчĕ.

Райĕçтăвком çак паха ĕçе шута илсе йалсовета куçса çӳрекен хĕрлĕ йалав пачĕ. Кунсăр пуçне финанс çекци членĕсене премилеме 500 тенкĕ, тата налог агĕнтне Лысĕв йулташа 200 тенкĕ укçа парса премилерĕ.

Çавнашкалах Атнар йалсоветне 3-мĕш квартăлти укçа-тенкĕ пухас плана 119 процент тултарнăшăн 500 тенкĕ укçа парса премилерĕç.

Халĕ çак икĕ йалсовечĕ те Октăбĕр умĕнхи ăмăртăва хутшăнчĕç. Вĕсем нойабĕрĕн 7-мĕш тĕлне 4-мĕш квартăлти финанс планне 80 процентран кайа мар тултарма пулса пĕр-пĕрне социалисăмлă ăмăртăва тухрĕç.

И. Л-в.

Хурамал йалсовечĕ мĕншĕн кайра пыраť?

Йĕпреç районĕнче Хурамал чи пысăк йал. Кунта йулашки çулсенче куљтурă учрежденийĕсен шучĕ те ӳссех пычĕ. Вăтам шкул, фељдшĕр пункчĕ, трахоматори, вулав çурчĕ тата ача çуратмали çурт уçрĕç. Кунсăр пуçне виç-тăватă суту-илӳ учрежденийĕсем тата почтă уйрăмĕ пур.

Çапла ĕнтĕ йалти актив, куљтурлă вăй пысăк. Апла пулин те халљхи вăхăтра Хурамал йалсовечĕ районра пур йенĕпе те кайа йулса пыраť. Ку акă мĕнрен килнĕ.

Йулашки вăхăтченех ку йалсовечĕн председателĕ пулса Иван Дуткин ĕçленĕ.

Дуткин ĕçке йерсе кайнă çын. Вăл политикă тĕлĕшĕнчен тата куљтурлăх йенчен те питех те кайра тăраť, хăйĕн куљтурлăхне тата политикăлă пĕлӳлĕхне хăпартассишĕн нихăçан та тăрăшман. Йалсовет председателĕн вырăнне йышăнса ларнă чух вăл пушшех нумай ĕçме тытăннă. Ерни-ернипе йалсоветне пырса курман. Хăйпе пĕрлех йалсовет çекретарне Н. Тимофейĕва тата финагĕнта П. Малышĕвă та ĕçке йавăçтарнă. Çаксем виççĕшĕ Хурамал çынни Алексей Удйурăв патĕнче,—сана налогран хăтарма пулăшатпăр, тесе икĕ талăк ташла-ташла ĕçнĕ.

Йалсовет аппаратчĕ çакăн пек йĕркесĕр ĕçленĕ хыççăн, паллах ĕнтĕ, Хурамал йалсовечĕ районра пур йенĕпе те чи кайра çапкаланса пынинчен нимĕн тĕлĕнмели те çук. III-мĕш квартăл финанс планне çак вăхăтченех мĕн пурĕ те 19 процент çеç тултарнă. Халĕ Дуткина председателрен кăларнă. Анчах çĕнĕ председател Й. Абалымăв йулташ халиччен те ĕçе тивĕçлипе йĕркелесе йараймасť-ха. Дуткин вăхăтĕнче çухатса пĕтернĕ йалти актива ĕçе хутшăнтарма тăрăшмасť. Йалсовет пленумĕн членĕсем темиçе чĕнсе те пленума пуçтарăнмаççĕ. Президиум членĕсенчен хăшпĕрисем хăйсем çине хунă ответлăха йышăнмасăр тăраççĕ. И. Денисăва хутпĕлменлĕхе пĕтерес тĕлĕшпе ĕçлекен çекцине йертсе пыма уйăрнă. Вăл ку тĕлĕшпе нимĕн те тумасť. Хут пĕлменнисемпе сахал пĕлекенсене вĕрентес ĕçе пайанччен те пуçăнман. Йалти комсомолĕцсем хуçалăхпа политикăлă ĕçе хутшăнмаççĕ, йалсоветне пулăшмаççĕ. Комсомол комитечĕн çекретарĕ Алексей Чангин, йалпора 1600 тенкĕ растратă тунăскер, ĕççе урам тăрăх йурласа çӳрет. Йепле-ха ĕнтĕ вăл комсомолĕцсене ĕçе йавăçтарма пултартăр?!

Вулав çуртне пырса кĕмеле мар кичем. Унта çĕмрĕк тенкелсемпе тусан айне пулнă çĕмрĕк шкафсем. Мăка пуртăпа тукаланă сĕтел-пукансем çурт ăшчиккине пушшех те сăнран йараççĕ. Вулав çурчĕ çумĕнче стена хаçатне çу каçса та пĕр номĕр кăларман. Спектакљсем, куљтурлă вечĕрсем çинчен аса илмели те çук. Çаксем ĕнтĕ пĕтĕмпех комсомол комитечĕ тата вулав çурчĕн пуçлăхĕ пулнă Маркăв начар ĕçленинчен килнĕ.

Йалсовечĕ пушарпа кĕрешес ĕçе те тивĕçлипе хакламасť. Пушар сарайне тума тытăннăранпа виçĕ çул иртрĕ, халĕ те туса пĕтермен. Йалта шыв тытма май пур пулин те пусăсемсĕр пуçне пĕр пĕве те туман. Йалсоветĕнче йал варринчи кӳлле тасатасси çинчен темиçе те йышăнса хăварнă, анчах йышăнни пурнăçа кĕмен. Йалта Йелĕп çырминче аван пĕвесем тума май пур. Апла пулин те ку çырма хĕлĕн-çăвĕн типсе выртаť.

Çакăн пек ĕççем тăраççĕ Хурамал йалсоветĕнче. Районти организацисем те вĕсене çакăн пекех кураççĕ. Анчах, унта улшăнусем тăвассипе нимĕнле ĕç те тумаççĕ.

В. Андрейĕв.

Выљăхсен ăратлăхне лайăхлатасси çинчен

Пирĕн Чăваш республикĕнче те выљăх-чĕрлĕхсен хисепĕ çулран-çулах хутшăнса пыраť. Йулашки 4 çул хушшинче măйракалă шултăра выљăхсен хисепĕ 23,5 процент, сыснасем—62,4 процент, сурăхсемпе качакасем—23,3 процент хутшăннă. 4 çул хушшинче колхозсен фермисем 1368 фермăран 1687 фермăна çити ӳснĕ. Кăçалхи çул колхозсенче выљăх-чĕрлĕхсем ĕрчетес тĕлĕшпе çĕнĕрен çитĕнӳ тунă. Малтанхи çур çулта лашасем—10,1 процент, măйракалă шултăра выљăхсем—13,9 процент, сыснасем—39,35 процент, сурăхсем—23.46 процент хутшăннă.

Республикăра выљăх-чĕрлĕхсен ăратлăхне лайăхлатас йенĕпе чылай ĕççем туса иртернĕ. Револљуциччен чăваш йалĕсенче ăратлă выљăхсем пулманпа пĕрех, вĕсем помещиксемпе кулаксен хуçалăхĕсенче çеç тĕл пулкаланă. Халљхи вăхăтра кашни колхозра тенĕ пекех ăратлă выљăхсем пур. 1934 çултанпа колхозсенчи чуптару пунктисем ваљљи ăратлă ăйăрсем—98, хĕрлĕ горбатовски текен ăратлă вăкăрсем—671 пуç, хĕрлĕ горбатовски пăрусем—283 пуç, симментал пăрусем 124 пуç, вĕтĕ çăмлă тĕрлĕрен йахлă такасем—14.844 пуç, вĕтĕ çăмлă йахлă пӳтексем—485 пуç, англин шурă йахлĕ сысна аçисем 1218 пуç, амисем 2569 пуç кӳрсе килнĕ.

Çапла ĕнтĕ халĕ пур çĕрте те ăратлă выљăхсем пур. Иртнĕ çур çул хушшинче колхозсенче ĕнесене 88,5 процент ăратлă вăкăрсемпе, сурăхсене 96,6 процент ăратлă такасемпе, сыснасене 94 процент ăратлă аçасемпе чуптарса хăварнă. 1938 çулăн пуçламĕшĕнче пирĕн республикăра ăратлă выљăх-чĕрлĕх фермисем 33, вĕсенче 190 лаша, măйракалă шултăра выљăхсем—2000 пуç, сурăхсем—550 пуç, сыснасем—1900 пуç шутланнă. Колхозсенче выљăхсен ăратлăхне метизаци урлă лайăхлатас йенĕпе пысăк ĕççем тунă.

Пире партипе правитĕлствă выљăхсен ăратлăхне метизаци урлă лайăхлатса пыма, çавна май выљăхсен продуктивлăхне ӳстерме хушаççĕ. Çак ĕçе çĕрĕç органĕсен çирĕп план тăрăх туса пымала. ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ „1938 çулта выљăх-чĕрлĕх ĕрчетмели государствă планĕ çинчен“ йышăннă постановлени тăрăх, пирĕн республикăри колхозсенче 144.000 ĕне, 292.000 сурăх, 46.500 сысна метизаци тумала. Çапла ĕнтĕ колхозсен фермисенчи тата колхозниксен килĕсенчи пĕтĕм выљăхсене метизаци тумала пулаť.

Халăх тăшманĕсем сăтăрламан пулсан, выљăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре епĕр тата пысăкрах çитĕнӳсем тунă пулăттăмăр. Анчах Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн руководствине тата районсенчи çĕрĕç органĕсене кĕрсе кайнă троцкисла-бухаринла шпионсемпе сăтăрçăсем чылай çул хушши республикăра выљăхсене ăратлантарса пырас ĕçе пăтраштарса йанă, ку ĕçе чарса тăнă. Вĕсем метизаци тăвассине чарса пынă, тĕрлĕрен чирсем сарса ăратлă выљăхсене пĕтернĕ, ăратлă аçа тата ама выљăхсемпе тĕрĕс усă курма чăрмантарнă. Кӳрсе килнĕ ăратлă выљăхсене сăтăрçăсем йурийех выљăхсен ăратлăхне сийенлес шутпа вырнаçтарса тухнă, ăратлă выљăхсене хутшăнтарса пĕтернĕ. Пĕр районах, пĕр колхозах тĕрлĕрен ăратлă выљăхсем панă, уйрăмах такасене çавăн пек пăтраштарнă. 1936 çулта республикăри 12 районра 500 така ытла вырнаçтарнă. Йетĕрне районĕнчи Пољанкă колхозĕнче 4 тĕрлĕ ăратлă такасем пулнă. Пăрачкав районĕнчи Никољски колхозĕнче симментал, хĕрлĕ горбатовски йахлă тата вырăнти лайăхлатнă вăкăрсем пулнă. Ăратлăха хутшăнтарса йани тата пĕр районрах, пĕр колхозрах темиçе тĕрлĕ йăхсем пулни выљăхсене ăратлантарас ĕçе пăтраштарнă. Çаксем, паллах, выљăх-чĕрлĕх ĕрчетессине чăрмантарнă. Республикăра ăратлă выљăхсем çитĕнтерес ĕç çаплах йапăх пыраť-ха. Çавăнпа пирĕн ăратлă аçа выљăхсене республикă тулашĕнчен кӳрсе килмеле килет. Кунпа пĕрлех таса ăратлă выљăхсем çитĕнтерес шутпа ăратлă ама выљăхсем те кӳрсе килмеле-ха.

Кăçал, план тăрăх, симментал текен ăратлă вăкăрсем 400 пуç, хĕрлĕ горбатовски вăкăрсем —300 пуç, англи йахлĕ шурă сысна аçисем —500 пуç, амисем —500 пуç, меринос такасем—1277 пуç кӳрсе килмеле.

Выљăхсен ăратлăхне хăвартрах лайăхлатас çĕрте кашни района пĕр йахлă выљăхсем парса планлани пысăк вырăн йышăнса тăраť. Тăватă çул кайарах ССР Сойузĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ йăхсене районсем тăрăх валеççе тухмали план тунă пулнă. Анчах, çав плана пысăк йанашсемпе, кабинетран тухмасăр, колхозниксемпе, йалхуçалăх специалисĕсемпе сӳтсе-йавмасăр тунă. Ăратлă выљăхсене вырнаçтарса тухасси хăйне тĕллĕн пулса иртнĕ, çакă практикăра йăхсене хутшăнтарса йама пулăшнă та ĕнтĕ. Хаклă йышши ăратлă сурăхсем, сăмахран, вырăнти меринос метизаци планĕнче пачах пулман. Планла йăхсем хушшинче сахал продуктивлă сурăхсем пулнă. Районсем тăрăх măйракалă шултра выљăхсем йенĕпе планлас ĕçре пысăк пăтраштарусем пулнă. Чылай ăратлă выљăхсене краснонемецки, йарославски, хĕрлĕ горбатовски, йурински, истобенски йăхĕсене ăратлă выљăхсем пуррине шута илмесĕр тата çак йăхлă выљăхсене ĕрчетекен вырăнсенчен инçетри районсенче вырнаçтарса тухнă. Паллах, çакăн пек йĕрке малашне пулма пултараймасť.

ССР Сойузĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн выљăх-чĕрлĕх тата лашасен тĕп управленийĕсем лашасене, măйракалă шултра выљăхсене, сурăхсене, сыснасене тата качакасене йăхсем тăрăх районсене планлас тĕлĕшпе государствă планĕн пройектне хатĕрлесе, ăна колхозниксен масси, совхозсенчи рабочисем, йалхуçалăхĕн специалисĕсем хушшинче сӳтсе-йавма тăратнă.

Районсене йăхсем тăрăх планлани пĕтĕм çĕршывра пысăк вырăн йышăнса тăраť. Çак план колхозниксен массин интересĕсене хӳтлет, кашни районра мĕнле йăхлă выљăхсем пулмалине палăртса параť. Çак план колхозсенчи выљăх-чĕрлĕх работникĕсене выљăх-чĕрлĕх ăратлăхне лайăхлатма пулăшмала. Çав планăн ăратлăх ĕçне лайăхлатма, тăшмансен сăтăрла ĕçĕсен йулашкийĕсене пĕтерме пулăшмала.

План пройекчĕ тăрăх, Совет Сойузĕнче шултра выљăхсен ăратлăхне лайăхлатма 20 йăх пулаť. Вĕсен хушшинче симментал, швицки, краснонемецки, голландски, холмогорски йăхĕсем тĕп вырăн йышăнса тăраççĕ. Çаксемпе çĕршывра 2.587 районри выљăхсен ăратлăхне лайăхлатма палăртнă. Симментал йăхĕсене 45 крайра, облаçре тата республикăра, пурĕ 1056 районра, вăл шутран пирĕн республикăри Улатăр, Патăрйел, Йĕпреç, Кувакинă, Парачкав, Турхан, Шăмаршă, Шăнкăртам, Йелчĕк, Канаш районĕсенче тата Куславкка, Шупашкар районĕсенчи хăшпĕр вырăнсенче сарма палăртнă. Ытти районсенче çавнашкалах Куславкка тата Шупашкар районĕсенчи хăшпĕр вырăнсенче ăратлă выљăхсене вырнаçтарса тухнипе тата ама выљăхсем мĕн чухлĕ пуррине хисепе илсе, хĕрлĕ горбатовски йăхĕсене сарма палăртнă.

Лашасен йăхне лайăхлатма пулăшакан йăхсем — донски, ахалтекински, английски, русско-рысистый тата ытти йăхсем пулса тăраççĕ. План пройекчĕ тăрăх, пирĕн республикăри Улатăр, Кувакинă, Пăрачкав районĕсенче брабансон йăхĕсене, ытти пур районсенче рысистый йăхĕсене ĕрчетмеле.

Пирĕн республикăри пур районсенче те шултра йышши шурă йахлă сыснасене ĕрчетмеле. План пройекчĕ тăрăх, Йетĕрнепе Куславкка районĕсенче англин кĕске çăмлă йахлă сурăхсене, ытти районсенче—колхозсенче прекос, колхозниксен хуçалăхĕсенче романовскипе прекос сурăхсене ĕрчетмеле.

Çапла ĕнтĕ, план пройекчĕ кашни район ваљљи уйрăм, выљăх-чĕрлĕхсен ăратлăхне лайăхлатма пулăшакан йăхсем палăртса параť. Çавăнпа та районсенчи партипе совет тата çĕрĕç органĕсен колхозниксен пухăвĕсенче, зоотехниксен, выљăх тухтăрĕсен, агрономсен районсенчи канашлăвĕсенче план пройектне тĕплĕн те сарлакан сӳтсе-йавассине организацилемеле. Çав плана сӳтсе-йавмали вăхăт пĕр уйăх çеç йулчĕ. Нойабĕр уйăхĕн йулашки кунĕсенче Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе парти Обкомĕ вăл плана çирĕплетеççĕ. Çав вăхăтчен пур районсенче те план пройекчĕ тăрăх панă сĕнӳсене, кăтартса панисене пухмала.

В. Чернов,
Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссарĕн заместителĕ.

А. Федотăв,
Выљăх-чĕрлĕх управленин начаљникĕ.

Республикăлă Испанире



ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: республикă çарĕн бойецĕ Ебро фронтĕнче.

Союзфото.

Китайри партизансен кĕрешĕвĕ

Çурçĕр Китайра кĕрешекен Китай партизанĕсем Йапони çарĕсене халь те чылайах пысăк сийенсем кÿреççĕ. Йапонĕцсемпе хайаррăн çапăçнă хыççăн Китай партизанĕсем Женçань хулине (Хебей провинцин кăнтăр-хĕвеланăç пайĕнче) туртса илнĕ. Çапăçура Йапонин 120 салтакне вĕлернĕ. Китай партизанĕсен тепĕр отрйачĕ Баодина — Хебей провинцин столици пулнă хулана çĕмĕрсе кĕнĕ. Çапăçу пуçланса кайнă. Çапăçура йапонĕцсене пысăк тăкаксем кÿнĕ. Партизансем йапонĕцсен çар пуйăсне сиктерсе сирпĕтнĕ те хуларан тухса кайнă.

Йулашки кунсенче Цзинаньрен çурçĕр-хĕвеланăç йенче партизансем Йапонин темиçе çар пуйăсне рельсă çинчен сирпĕтсе йарса çĕмĕрнĕ. Йапонин нумай салтакĕ вилнĕ. Цзинаньпе Таньзин хушшинчи çыхăну татăлнă.

(ТАСС).

— o —

Германийе колонисем тавăрса памали план

Лондăнран пĕлтернĕ тăрăх, Англи правительствин „шалти кабинечĕ" текен кабинет хальхи вăхăтра Германийе ĕлĕк ун аллинче пулнă колонисене тавăрса парас ыйтăва пăхса тухаť. „Шалти кабинет" туса хатĕрленĕ план тăрăх, Германийе Того тата Камерун колонийĕсене тавăрса параççĕ. Çавăн пекех тата Германийе Бельгийски Конго çинчи тата Португалин Ангола йатлă колонийĕ çинчи çутçанталăк пуйанлăхĕсемпе усă курма май параççĕ.

Çапла вара, Германийе татах колонилĕ уступкăсем пани пуринчен ытла Францишĕн, Португалишĕн тата Белгишĕн сийенлĕ пулаť.

(ТАСС).

Халăх переписçне ирттерме кадрсем хатĕрлеççĕ

Чăваш республикĕн халăх-хуçалăх учĕчĕн управленийĕ халăх переписçне ирттерме кадрсем хатĕрлеме тытăннă.

Октăберĕн 20-мĕш тĕлне халăх переписĕпе ĕçлекен районри инспектăрсене 24 çынна ултă кунлăх курсран вĕрентсе кăларнă.

Республикăра участкă инспектăрĕсем мĕн пурĕ 57 çын. Вĕсенчен 48 инспектăрне 5 кунлăх курсран вĕрентсе кăларнă. Халĕ 16 çын вĕренет.

Нойабĕрĕн 1-мĕшĕнче районри инспектăрсен помощникĕсене—25 çынна 6 кунлăх курсра вĕрентме тытăнаççĕ.

Çавăн пекех нойабĕрĕн 9-мĕшĕнче перепис уйрамĕсен заведуйущисен курсĕ организацилеççĕ. Вăл курсран 24 çын вĕрентсе кăлармала.

— o —

Ответлă çынсем уйăрман

ШАХАСАН. Атнаш йалсоветĕнче ку тарана çитсе те халăх переписне хатĕрленес май нимĕнле татăклă ĕç сем те туман. Йалсоветĕнчи руководителсем перепис ыйтăвĕпе интересленмеççĕ. Нимĕн те туман тесрен переписре ĕçлеме учитĕл Федăрав йулташа уйăрнă та йалсовет председателĕ Сорокин йулташ «хăм ĕçе тунă», тесе лăпланса ларнă. Федăрав йулташ та хăй çине хунă ĕçе маннă, халăха перепис çинчен пĕре те ăнлантарман. Çак йалсоветне кĕрекен Чăрашкасси йалĕнче переписре ĕçлеме ответлă çынсем уйăрман. Йалсоветĕнче хуçалăх кĕнекине лайăх йĕркелемен, унтах хăшпĕр графасене тултарман, нумай çитменлĕхсем туса пĕтернĕ.

Г. Исайĕв.

Суту-илÿ ĕçĕнчи çитменлĕхсене халĕ те пĕтермен

ШАХАСАН. Районри суту-илÿ организацисем кÿллен кирлĕ таварсене çителĕклĕ кÿрсе килес тĕлĕшпе нимĕн те тумаççĕ-ха. Йалпо работникĕсем пайщиксемпе ĕçлеменнине пула, хăшпĕр йалпосем (Йамаш, Чулкăмака) пĕр кварталта та таварçаварнăш планĕсене тултараймаççĕ. Йамаш йалповĕн (председателĕ Антонăв йулташ) 3-мĕш кварталта 170 пин тенкĕлĕх тавар сутмала пулнă пулсан, вăл плана 79 процент çеç тултарнă. Чулкăмака йалповĕ те 86 процент анчах тултарнă. Çавăн пекех Шăхасан йалповĕ те 3-мĕш квартал планне тултараймарĕ. Районĕпе те 3-мĕш кварталри таварçаварнăш планне 91 процент анчах тултарнă.

Халăх ташманĕсем суту-илÿ ĕçĕнче сатăрла ĕçсем туса пынă. Райсойуз председателĕ пулнă Леонтйĕв йалпосене таварсем илме кайма чарса тăнă, çавна пула йалсенче ик-виç тĕрлĕ конфетсемпе анчах сутă тунă. Леонтйĕв ĕçленĕ вăхăтра райсойуз ĕçне пур йенчен те йапăхтарнă, лайăх работниксене ĕçрен кăларса, вĕсем вырăнне ĕçлеме пултарайман йурăхсăр çынсене илнĕ.

Ака, райсойуз склад пуçлăхне Степанăв йулташа ним айăпсăрах ĕçрен кăларнă, ун вырăнне ĕçсе çÿреме йуратакан çынна Иакăвлĕва лартнă. Йакăвлĕв склад пуçлăхĕнче ĕçленĕ вăхăтра, Леонтйĕвăн хÿттипе, Кăшнаруй йалпоне ватка ăшне 10 килограм чул чиксе парса улталанă. Çавăн пекех складри вĕрен çине шыв сапса йаварлатнă. Складран йалпосене таварсем панă чухне счотсене пăтратса çырса панă.

Райсойуз складĕнче çимелисем пасăлса пĕтни, йурăхсăра тухни пулнă. Анчах районри сывлăх пайĕнчи санинспектăр Захарăв ун çине çавăрăнса пăхман. Вăл йалсенчи лавкăсене кайсан, «тасамарлăх çинчен акт çыратăп» тесе продавецсене йурийех хăратса, мануфактура илнĕ, вара тасамарлăха курсан та нимĕн те туман. Тата Захарăв столовайĕнче уйрăмăн апат çисе пурăннă, хăй ирĕкĕпех складран аш-какай илнĕ.

Райĕçтăвкомăн суту-илÿ пайĕн йалпосене, столовайсене лайăх ĕçлеттерме тăрăшса, кÿллен кунах йертсе пымала. Анчах вăл ку тĕлĕшпе нимĕн те тумасť-ха.

Профсойузсен суту-илÿ ĕçне аванлатас пирки тăрăшса ĕçлемеле. Анчах ку вăл Шăхасанта çук-ха.

Шăхасанти служăщисем, чукунçул çинчи рабочисем халĕ те çакăршăн черет тăраççĕ. Суту-илÿ работникĕсем кун пек йапăх ĕçленине текех тÿсме çук,—районри йертсе пыракан оргăнсен суту-илÿ ĕçне лайăхлатса йама кирлĕ ĕçсене тумала.

Дм. Иванов.

— ◆ —

Панă сăмаха пурнăçа кĕртмеççĕ

Куславкка. Комбинатри каскалакан цехри стаханăвĕцсемпе инженерла-техникла работниксен нумай пулмасť пулса иртнĕ канашлăвĕнче комбинат диспетчĕрĕ Мотин йулташ малашне материал çителĕклĕ парса тăратпăр тесе сăмах паначчĕ. Анчах диспетчĕр хăйĕн сăмахне йĕркеллĕн пурнăçа кĕртмест. Материал, чĕрĕ тавар çитменни халĕ те каскалакан цеха плана тултарас ĕçре пысăк чăрмав кÿрет. Октăберĕн 3--4--5-мĕшĕсенче чылай станоксем ĕçлемесĕр ларчĕç. Октăберĕн 9-че те савалакан станок 2 сехет хушши кăна ĕçлерĕ.

Чĕр тавар çителĕклĕ пулсан, рабочисем нормăна ытлашшипех тултараççĕ. Акă, октăберĕн 8-мĕшнех илер. Вăл кун материал çителĕклĕ пулнă. Чылай бригадăсем паха пример кăтартнă. Йаичникăв йулташ бригади çав кун плана 150,6 процент, Илйин йулташ бригади 136 процент, Мозйаков йулташ бригади 110 процент тултарнă.

Комбинат директăрĕн Никитин йулташăн цехсене йĕркелĕ ĕçлеттерессишĕн сăмахпа çеç мар, ĕçпе тăрăшмала.

Г. Кузнецов.

— ◆ —

Фото ĕçне йуратакан çамрăксен фото-ÿкерчĕкĕсен выстăвки

Ленинла-сталинла комсомол 20 çул тултарнă йатпа организациленекен фото ĕçне йуратакан çамрăксен фото-ÿкерчĕкĕсен Пĕтĕм Сойузри выстăвкине Чăваш республикĕнчи ачасен техникăлă станцийĕ хăй ÿкернĕ фото-ÿкерчĕксене йанă.

Республикăра ачасен техникăлă станцин фотолабораторине халĕ çеç Мускаври Шверник йачĕпе тăракан ачасен техникăлă Тĕп станцинчен Мускава йанă фото-ÿкерчĕксенчен выстăвкă валльи икĕ фото-ÿкерчĕк суйласа илни çинчен çырса пĕлтернĕ. Вăл фото-ÿкерчĕксем: пĕри—Шупашкарти 3-мĕш номĕрлĕ шкулта вĕренекен Б. Васильĕв ÿкернĕ „Пианинă çинче вылльакан пионеркă", теприçав шкултах вĕренекен В. Шипунов ÿкернĕ „Вĕренекенсем физкультурă праçникĕнче". Вăл фото-ÿкерчĕксене выстăвкăна пысăклатса параççĕ. Октăберĕн 11-мĕшĕнче çав фото-ÿкерчĕксен негативĕсене пысăклатма Мускава Шверник йачĕпе тăракан ачасен техникăлă станцине йарса панă.

— ◆ —

Художествăлă пултарулăх олимпиади

ШАХАСАН. Районри комсомол комитечĕ ленинла-сталинла комсомол 20 çул тултарнă йатпа çамрăксен художествăлă пултарулăхĕн олимпиадине ирттерет. Олимпиадă октăберĕн 14-мĕшĕнче пуçланчĕ.

Октăберĕн 14-мĕшĕнче, олимпиадăн малтанхи кунĕнче, Кипечри вăтам шкулта вĕрентекен учителсемпе вĕренекенсем хăйсен пултарулăхне кăтартрĕç. Уйрăмăнах Абрамăвпа Антонăвă пĕччен шерĕн аван йурласа пачĕç. Иккĕмĕш кун Вăрманйалĕнчи шкулта вĕренекенсем хăйсен пултарулăхне кăтартрĕç.

Дм. Иванов.

Республикă тулашĕнчи чăвашсем хушшинче

Колхозниксем хушшинчи агитаци

Карл Маркс тата Саккопа Ванцети йачĕсемпе тăракан колхозсенче (Похвиçнĕ районĕ, Куйбышĕв облаçĕ) комсомолĕц Й. С. Имангулăв (вăлах вулав çурчĕн пуçлăхĕ) агитаци ĕçне лайăх сарса пыраť. Колхозниксене кашни каçах клуба пухса хаçат вуласа параť. ПСК(б)П историпе паллаштараť. Калаçусене итлеме 40—50 çын пухăнаççĕ.

Имангулăв йулташ Саккопа Ванцети йачĕпе тăракан колхозра 4 бригадăри çтена хаçачĕсене кăларма пулăшса пыраť. Вăл хаçатсем 10 кунта пĕрре тухса тăраççĕ.

Асăннă колхозсенче политикăлăмассăлă ĕçе аван организацилениипе колхозниксем хушшинче хаçат-журналсем сарасси те вăйлансах пыраť. Ку колхозсенче хаçат-журнал çырăнса илмен колхозник пĕре те çук.

Хальхи вăхăтра Имангулăв йулташ Октăбĕр революци 21 çул тултарнă тĕле хатĕрленет. Колхозсем хушшинчи социалисăмлă ăмăртăва вăйлатассишĕн тăрăшса ĕçлет.

Дм. Ив. Имангул.

— ◆ —

Противогазпа çÿреме вĕренеççĕ

ÇЕРПУ. Фельдшĕрсен шкулĕнчи Осоавиахим организацийĕ хăйĕн ĕçне лайăх йĕркеленĕ. Осоавиахим членĕсем оборонă ĕçне тăрăшса вĕренеççĕ. Октăберĕн 15-мĕшĕнче 250 студент ытла противогаз тăхăнса сехет çурăшар вĕренчĕç. Студентсем малтанхи хăнăхулă вĕренÿре „ăван" паллăсем илчĕç. Вĕсем Пĕтĕм Сойузĕпе пыракан химилĕ ăмăртăва хутшăннă.

К. Михайлăв.

— o —

Кĕскен

* Нурăсри педучилищăра (Варнар р.) кашни кунах уроксем умĕн 15 минутлă политинформаци туса ирттереççĕ.

Е. Александрăв.

* Шăхасанти почтă кантурĕнче ĕçлекенсем Морзе азбукине вĕренмели кружок организациленĕ. Кружок заньатине 16 çын çÿреççĕ.

А. Йегорăв.

* Кивĕ Ирчемес йалĕнчи (Хĕрлĕ Чутай р.) сакăр ача амăшĕ М. Алексейĕвă государствăран 4 пин тенкĕ пособи илнĕ. Телейлĕ ачасен амăшĕ вăл укçапа ачасем валльи нумай йапаласем илсе панă.

А. Павлăв.

* Сĕнтĕрвăрринчи çĕрйĕркелÿпе мелиораци техникумĕнчи Осоавиахим членĕсем, Пĕтĕм Сойузри химилĕ ăмăртăва хатĕрленес майпа, кашни кунах икĕ сехет хушши противогаз тăхăнса вĕренеççĕ.

Н. Павлăв.

Редакцине килнĕ çырусем

Преми укçине çухатрĕç

Çулăври (Тутаркас районĕ) колхоз хорĕ 14 çул ĕçлет ĕнтĕ. Хора 68 çулхи колхозник Ф. Иванов йертсе пыраť. 14 çул хушшинче хор калама çук пысăк çитĕнÿсем турĕ. Сăмахран, 1932 çулта пулса иртнĕ художествăлă пултарулăх кружокĕсен I-мĕш олимпиадинче Çулăври колхоз хорĕ пĕрремĕш вырăна тухрĕ, ăна физгармоньпе премилерĕç. 1935 çулта художествăлă пултарулăх кружокĕсен республикăри 2-мĕш олимпиадинче те малти рете тухрĕ, хăйĕн пултарулăхне аван кăтартса панăшăн хора 500 тенкĕ укçапа премилерĕç. 1936 тата 1937 çулсенче пулса иртрĕ 1-мĕшпе 2-мĕш радиофестивальсенче те хор малти вырăнсенчен пĕрине йышăнчĕ. Анчах, хăйĕн художествăлă пултарулăхне татах та çÿлерех хăпартас ĕçре хора чăрмантарса, унăн ĕмĕтне татса пыракансем нумай. Сăмахран, 1935 çулта пулса иртнĕ художествăлă пултарулăх кружокĕсен 2-мĕш олимпиадинче премиленĕ 500 тенкĕ укçана хор пайан кун та алла илеймен. Çутĕç Халăх Комиссариачĕ çак укçана Çулăври „Урожай" колхоз вырăнне Торайри „Пучах" колхоза йанăш куçарса панă пулнă. Çапла вара Торай колхоз председателĕ А. Степанăв 500 тенкĕ укçана таçта кайса чикнĕ (çитменнине тата вăл иртнĕ çулта вилнĕ). Çак ĕçпе ĕнтĕ хора йертсе пыракан Иванов йулташпа хор членĕсем районри прокурор патне темиçе хутчен те çитнĕ, анчах вĕçĕ курăнмасť-ха.

Халĕ Торай колхоз председателĕ С. Алексейĕвпа Çулăври колхоз председателĕ А. Васильĕв та „нимĕн те пĕлместпĕр"—тесе çеç лараççĕ. Çавăн пекех йалсовет председателĕ Григорий Салтыков ку ĕç çинчен нимĕн те пĕлесшĕн мар. Хора пулăшу парасси çинчен асăнмали те çук, ун çинчен вĕсем нихăçан та аса илмен. Çулăври колхоз хорĕн премийĕ—500 тенкĕ укçа ăçта çухалчĕ-ши?

Ф. Ландышĕв.

— o —

Организаци ĕçне вăйлатмала

Мăн Етменти (Елĕк р.) „Хĕрлĕ сухаç" колхоз çумĕнчи Осоавиахим организацине уçнăранпа чылай çулсем иртрĕç ĕнтĕ. Осоавиахим организацин пĕр пĕчĕк калибрлĕ винтовкă, виçĕ противогаз тата тепĕр вĕренмели винтовкă пур. Анчах çаксемпе Осоавиахим организацин организатăрĕ Григорйĕв йулташ тивĕçлипе усă курма шутламасť, Осоавиахим членĕсене халĕ те винтовкăпа тĕл пеме, противогазпа усă курма вĕрентме тытăнман.

Осоавиахим райсовечĕн Мăн Етменти организаци çине кирлĕ пек çавăрăнса пăхса, ĕçре пулăшмала.

Й. Кондратйĕв.

Кашкăрсене пĕтерес пулаť

Ишлей районĕнчи Вăрманкас тавринче кашкăрсем йĕрки çук ĕрченĕ. Вĕсем, выльăхсене тытатыта çисе, колхозсене, колхозниксене пысăк сийен кÿреççĕ. Кашкăрсем кĕçĕр пăру тытнă, сурăх тытнă, хурсене пăвнă... тесе калаçни кунта кашни кулленех илтĕнет.

Йалсовечĕпе колхоз правленин кашкăрсене пĕтерме тăрăшмала. Анчах, вĕсем тăрăшни çук-ха.

Октăберĕн 17-мĕшĕнче Вăрманкаса Шупашкартан 23 охотник пынă. Вĕсем кашкăрсене облавă туса тытасшăнччĕ. „Парижская Коммуна" колхоз правленин председателĕ Германăв йулташ охотниксене пулăшма, кашкăрсене вĕлерме 25 çын уйăрса пама пулчĕ. Шел те, унăн сăмаххи пуша халлап çеç иккен. Вара охотниксем облавăна хатĕрленни ахалех пулчĕ. Вĕсем облавăсăрах пĕр кашкăр тытрĕç.

Вăрманкас йалсовечĕн тата колхоз правленин кашкăрсене пĕтерме охотниксене пулăшмала çеç те мар, хăйсен ку ĕçе организацилемеле.

Ф. Ал-в.

— ◆ —

С У Д

Растратчиксем

Канашри культура çурчĕпе кинобазăра ĕçлекенсем—директăр Калмыков, кассиршă Кургановскайа тата счетовод Горинă государствă пурлăхне çаратса, кино кăтартас ĕçе йапăхтарса пурăннă.

Калмыков 2.300 тенкĕ, Кургановскайа 6.300 тенкĕ, Горинă 100 тенкĕ государствă укçине хăйсен кăсйине чикнĕ.

Çак ĕçе Канаш хулинчи халăх сучĕ пăхса тухса, Калмыкова 2 çул хушши, Кургановскайана 3 çул хушши тĕрмере хупса усрамала, Горинăна 8 уйăх хушши ирĕксĕр ĕçлеттермеле турĕ.

И. Степанăв.

— ◆ —

Парти вĕренĕвĕн çуртĕнче

ПСК(б)П Обкомĕн парти вĕрентĕвĕн çурчĕ октăберĕн 25-мĕшĕнче каçхине 6 сехетрен пуçласа, ПСК(б)П историне вĕренекенсене валльи „Утопический научный социализм" темăпа лекци ирттерет.

— ◆ —

Пулни-иртнисем

Шупашкарти автогужтрест общежитинче пурăнакан Н. Д. Борисăвă нумай пулмасť ссылкăран таврăннă Г. Симаковăпа паллашнă та ăна йăмăкĕ тесе суйса, хăй патĕнче икĕ каç выртарнă. Иккĕмĕш каçĕнче Г. Симаковă шофĕрсен общежитине кĕрсе, вĕсенне 1500 тенкĕлĕх тĕрлĕрен йапаласем вăрласа тарнă.

Ответлă редактăр Н. М. ÇЕМЕНĂВ.

ТУХТĂР КАНАШĔСЕМ

Варвиттилĕ тиф чирĕнчен сыхланасси

Варвиттилĕ тиф чирĕ халăх хушшинче авалранах питĕ пысăк сийен кÿрсе пынă. Унпала нумай çын вилнĕ, чылайĕшĕ тата ĕмĕрлĕхех инвалид пулса йулнă. Çак чир сикекен хăрушă вĕри чирсенчен пĕри пулса тăраť.

Аслăлăх çак хăрушă чиртен сыхланмали май шухăшласа тупнă. Варвиттилĕ тиф чирне саракан микробсен вăй-хăватне тĕрлĕ емелсемпе вăйсăрлатса етеме йатарласах укол тăваççĕ, ăна кĕске вăхăтлăха, сăмăллăн чирлеттереççĕ. Вара, çакăн пек кĕске вăхăтлăха чирлесе илекен çыннăн йунĕнче варвиттилĕ тиф чирĕнчен сыхланмали вăй (иммунитет) пулса йулаť. Çапла чиртен сыхланмали вăй илсе йулнă (иммунизированный) çынсем варвиттилĕ тиф чирĕпе 6—8 уйăх хушши чирлемесĕрех йулма пултараççĕ.

Çак уколсем тумалли емелсене лабораторисенче хатĕрлеççĕ. Вара вĕсене государства тĕп контролĕ усă курма йурăхлипе йурăхлă маррине сăнаса пăхаť.

Çак чиртен йаланах сыхланас тесен общежитисенче, казармăсенче тата ытти пĕрлешÿлĕ çуртсенче, столовайсенче, пекарнĕсенче, выльăх пусмали вырăнсенче, апат-çимĕç усракан складсенче, шыв станцисенче пурăнакансен, пĕр вырăнтан тепĕр вырăна куçса çÿрекенсен, сывлăха сыхлас тĕлĕшпе пульницăсенче тата ытти çĕрте ĕçлекенсен, чукунçул çинчи столовайсенче, буфетсенче ĕçлекенсен тата ыт. те кашни 6 йе 8 уйăхра уколсем тутармала.

Хăшпĕр чух варвиттилĕ тиф чирĕ пурри палăрсан, вырăнти оргăнсем халăх хушшинче обйазателнă уколсем тумали çинчен постановлени кăлараççĕ. Çавăн пек постановлени тухсан, 12 çултан иртнисен пурин те пĕр пăркаланса тăмасăрах уколсем тутармала.

Çулталăк хушшинче уколсем тума çуркуннепе кĕркунне аванрах вăхăтсем пулса тăраççĕ.

Укола çакăн пек йĕркепе тăваççĕ: халиччен укол тутарман çынсен малтанхи хутра виçĕ укол йышăнмала: пĕрремĕш уколра 0,5 грам, иккĕмĕшĕнче 1,0 грам, виççĕмĕшĕнче 1,0 грам емел йараççĕ. Çулталăкра иккĕмĕш хут укол йышăнакансене пĕрремĕш уколра 1,0 грам, иккĕмĕшĕнче 1,0 грам емел йараççĕ.

Кашни 6 йе 8 уйăхран уколсене йĕркелĕн тутарса пурăнсан çав çынна варвиттилĕ тиф чирĕ нихăçан та йермест.

Мĕнле те пулин вĕри чирпе чирленисене (вĕриленнĕ вăхăтра); çулла пÿре, чĕре, йе ÿпке (чахоткă) чирĕсемпе чирленисене, йун сахал çынсене, çийе йулни 4—5 уйăхран иртнĕ хĕрарăмсене, йе 10 уйăха çитечченхи ачана кăкăр ĕмĕртекен амăшĕсене, 12 çула çитмен çамрăк ачасене укол тума йурамасť.

Укол тăвиччен, ÿт-пĕве лайăх çуса тасатмала. Уколсене ĕç пĕтнĕ хыççăн, ыран канмали кун тенĕ чух тутармала. Укол тусан, малтанхи кунах етеме вĕрилентерме пултараť, анчах пурне те пĕр пек мар. Хăшĕсен вĕриленни 37,5; 38,0 йе 39,0 градуса çитме пултараť. Пуç ыраткалаť, çан-çурăма йăвăрлантараť, сăрăлтаттараť, çÿçентерет йе хăстараť, хăшĕсен тата вар-хырăм пăсăлаť, сыпăсем ыратаççĕ, укол тунă вырăнсем щыçнă пек тăртанаççĕ т. ыт те. Кун пек пулнинчен хăрама кирлĕ мар, вăл пĕр талăкран йе иккĕмĕш талăкранах иртет. Ку тĕлĕшпе емелленме те кирлĕ мар. Хăшпĕрисем пуç ыратнинчен 0,25 грам аспирин ĕçме пултараççĕ. Тухтăр патне каймасан та йураť.

Укол тутарнă хыççăн малтанхи 1—2 кун хушши ытлашши йăвăр ĕçлеме йурамасť. Сăра-ерех вуçех те ĕçмеле мар. Мунчана та кайма йурамасť. Йăвăртарах чирлекенсене (вĕри 37,5 градусран иртет пулсан) пĕрер талăклăха ĕçрен хăтармала.

Хамăр сывлăха, ача-пăчасен сывлăхне йерекен чир-чĕртен сыхлас тĕлĕшпе, ирĕккĕнех çулран-çул çак çÿлте асăннă пек уколсем тутарса тăрсан, тасамарлăхсене пĕтерсен, халăхăн культурлă та хаваслă пурнăçĕ ÿснĕ май, йерекен вĕри чирсене тымарĕпех тĕп тăвăпăр.

Врач И. Стольаров.

П Ĕ Л Т Е Р Н И

ЧАССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1938 ç. çентăберĕн 8-мĕшĕнче йышăннă 912-мĕш № постановлени тата Всесопромлессойуз 1938 çулти майăн 26-мĕшĕнче йышăннă 235-мĕш № постановлени тăрăх, 1938 çулти çентăберĕн 21-мĕшĕнче Чăвашкульпромсойузпа Чăвашлеспромсойуза реорганизацилесе Чăвашдревпромсойуз йатне парса Вăрман промысли Коопĕрацин Республикăри пĕр Сойузне пĕрлештернĕ; Чăвашлеспромснабсбытпа Чăвашкульпромснабсбыта—Чăвашдревпромснабсбыт йатне парса Снабсбытăн пĕр пайне пĕрлештернĕ. Çÿлте асăннă организацисем тĕлĕшпе организацисемпе çынсен претензисем тата расчотсем пур пулсан, вĕсен хăйсен претензийĕсене çак пĕлтерÿ пичетленсе тухнă хыççăн икĕ ерне хушшинче Чăвашдревпромсойузăн Оргбÿроне тата Снабсбыт Пайне памала. Адрес: гор. Чебоксары, ул. Кадыкова, д. № 7. Кăтартнă срук хыççăн претензисене йышăнмаççĕ.

„Чăвашдревпромсойуз" Оргбÿровĕ.

Октăберĕн 31-мĕшĕнчен пуçласа нойаберĕн 4-мĕшне çитиччен

Шупашкарта, Чапайĕвски посолăкра, Базарнăй плошчĕдре

ПРАÇНИК УМĔНХИ

ПИЛĔККУНЛĂХ ЙАРМĂРКĂ

ПУЛСА ИРТЕТ

Суту-илÿ организацисем йармăркăна промышлĕннăç, апат-çимĕç, хуçалăхла-москательнăй тата культурă таварĕсене йышлă асортиментпа

КÿРСЕ КИЛЕÇÇĔ

Колхозсене, колхозниксене тата йединоличникла хуçалăхсене йармăркăна йалхуçалăх производствинчи продуктăсемпе, чăх-чĕпсемпе, аш-какайпа, пахча-çимĕçсемпе, çăмартапа, сĕтпе, çупа, улма-çырласемпе тата ытти продуктăсемпе

КИЛМЕ ЧĔНЕÇÇĔ

ЙАРМАРКОМ

„ЧĂВАШ КОММУНИ" СЫРĂНСА ИЛМЕЛИ ХАКСЕМ: ПĔР УЙĂХА 2 т. 50 пус 3 УЙĂХА 7 т. 50 п., 6 УЙĂХА 15 т., СУЛТАЛĂКА 30 тенкĕ. ПОДПИСКĂНА СЫХАНУ УЙРАМĔСЕМ, ПИСМОНОСЕЦСЕМ ЙЫШĂНАÇÇĔ.

Уполномочнный Чувашглавлита № 549 Гов Чебоксары, типографии № 1 Местпрома ЧАССР, заказ № 793 ф 6 58 × 84 п. л.